ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Ноябрь 3 ЫТЛАРИКУН № 215 (9124) Хакĕ 20 пус. 36-мĕш çул тухать.

Ялхуçалăх работникĕсем! Социализмла ялхуçалăхĕн пур отраслĕсене те çĕнĕрен хăватлăн çĕклентерессишĕн кĕрешĕр: ситес икĕ-виçĕ çул хушшинче пирĕн çĕршыври халăхăн ӳссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтерме кирлĕ чухлĕ апат-çимĕç продукчĕсем, çăмăл промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçне кирлĕ чухлĕ чĕртавар парса тăмалла пултăр!

(КПСС Центральнăй Комитечĕ Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнă ятпа чĕнсе каланисенчен).

Ялти политикăлла-массăлла ĕçе вăйлатар

Партин Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ социализмла ялхуçалăхне малалла хăвăрт аталантарас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерме палăртрĕ.

Социализмла индустрие хăватлăн аталантарса пынă никĕс çинче хамăр çĕршывра ялхуçалăх продукчĕсем нумайран та нумай пулмалла тăвас задачăна пурнăçласси коммунизм тăвас ĕçĕн чи кирлĕ пайĕ пулса тăрать. Хальхи условисенче ку задача пĕтĕм халăхăн чи кирлĕ задачи пулса тухса тăчĕ. Çак задачăна ăнăçлă пурнăçлани рабочи класпа колхоз хресченĕсем хушшинчи союза малалла тĕреклетме пулăшать.

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ куллен кирлĕ промышленность таварĕсем туса кăларассине ӳстерессипе тата вĕсен пахалăхне лайăхлатасси çинчен, çавăн пекех апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине ӳстересси тата вĕсен пахалăхне лайăхлатасси çинчен постановленисем йышăнчĕç. Çак документсем пирĕн партипе правительство халăх ырлăхĕшĕн, унăн пурнăçĕпе культурăлла шайне куллен ӳстерсе пырассишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшнине кăтартса параççĕ. Куллен кирлĕ промышленность таварĕсем тата апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине ӳстерес тĕлĕшпе пирĕн Тăван çĕршыв умĕнче тăракан аслă задачăсем социализмла ялхуçалăхĕн пур отраслĕсене те хăвăрт тата вăйлăн аталантарса пыма хушаççĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ ялти политикăлла-массăлла ĕçе, ĕçсыннисене политикăлла воспитани парас ĕçе пур майсемпе те вăйлатма кирлине палăртрĕ.

Хальхи вăхăтра нумай колхозсенче тата МТС-сенче ĕçсыннисен культурăпа йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçе начар йĕркеленĕ-ха. Социализмла ялхуçалăхĕ аталанса пынă май колхозниксен, МТС-сенчи тата совхозсенчи работниксен культура ыйтăвĕсем те хăвăрт ӳссе пыраççĕ. Анчах парти райкомĕсемпе, пуçламăш парторганизацисем политикăлла-массăлла ĕçе йĕркеленĕ чухне çав пысăк уйрăмлăхе тивĕçлипе шута илмеççĕ.

Политикăлла агитацин идейăлла шайĕ, унăн витĕмлĕхĕ сӳлĕ пусăмра тăмасçĕ-ха. Парти райкомĕсем пропагандăпа агитацин пурнăçра тĕрĕсленнĕ формисемпе анлăн усă курмаççĕ. Чылай çĕрте партин ертсе пыракан работникĕсем агитаторсене, лекторсене, докладчиксене пухса, вĕсене хамăр Тăван çĕршыв, республика, район тата колхозсемпе МТС-сем умĕнче тăракан задачăсем çинчен тĕплĕн тата куллĕн ăнлантарса памаççĕ, политикăлла-массăлла ĕçе йĕркелеме вырăнти парторганизацисене тата вĕсен агитколлективĕсене практикăлла ĕçпе пулăшмаççĕ. Час-часах çакăн пек те пулать: политикăлла-массăлла ĕçе ĕççыннисен пур сийĕсем хушшинче те туса пымаççĕ, хăшпĕр ялсенче, вĕсенче культура учрежденийĕсем çук пирки, докладсемпе лекцисем тата каласусем вăхăтран вăхăта кăна ирттереççĕ. Çав ялсенчи ĕçсыннисем партипе совет работникĕсемпе сайра хутра çеç тĕл пулаççĕ.

Парти райкомĕсен политикăлла-массăлла ĕçе ертсе пырассине тĕпренех лайăхлатмалла. Партипе Совет правительстви ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен, куллен кирлĕ промышленность таварĕсемпе апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине ӳстерессипе тата вĕсен пахалăхне лайăхлатасси çинчен йышăннă постановленисене мĕнпур колхозниксене, МТС-семпе совхозсенчи рабочисене лайăх ăнлантарса памалла.

Политикăлла-массăлла ĕç мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе совхозсен работникĕсене хавхалантартăр, вĕсене социализмла ялхуçалăхĕн пур отраслĕсене те малалла аталантарассишĕн пĕтĕм вăйпа ĕçлеме тата творчествăлла пуçарулăха сарса яма хавхалантарса пытăр. Колхозсен обществăлла хуçалăхне тĕреклетес, пĕтĕм продукципе тавара продукцине ӳстерес, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли государство планĕсене вăхăтра тултарас, колхозсен укçан тата натурăпа илекен тупăшĕсене ӳстерес, колхозниксен материальнăй пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе умра тăракан задачăсене пурнăçлама колхоз ĕçченĕсен социализмла ăмăртуне анлăн сарса ямалла. Çак задача вăл политикăлла-массăлла ĕçĕн тĕп тĕллевĕ пулса тăмалла.

Колхозлă ялта политикăлла ĕçе анлăн сарса яма пысăк майсем пулса тăчĕç. Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тăрăшнипе ялти интеллигенцин йышлă çарĕ ӳссе ситĕнчĕ. Колхоз стройĕ çĕрĕсĕн пысăк квалификациллĕ кадрĕсене пăхса ситĕнтерчĕ. Совет государстви ялсенче клубсем, вулав çурчĕсем, библиотекăсем усма укса-тенкĕ хĕрхенсе тăмасть. Халăха кино кăтартас, куллен радио итлеме майсем туса парас тĕлĕшпе нумай ĕçсем тунă. Совет государстви халăх валли хаçат-журналсем, политика, наука, культура, техника ыйтăвĕсем тăрăх кĕнекесем питĕ нумай кăларать. Çаксем вĕсем политикăлла-массăлла ĕçе нихçанхинчен те лайăхрах туса пыма пулăшаççĕ.

Парти организацийĕсен уйрăмах агитаторсен, докладчиксемпе лекторсен ĕçĕ çине тимлĕн пăхас пулать. Вĕсем ĕçсыннисене партин идейисемпе тĕллевĕсене ăнлантарса параççĕ, умра тăракан задачăсене тарăнăн ăнланса илме пулăшаççĕ тата çав задачăсене пурнăçлама пĕтĕм вăй-хăвата парса ĕçлеме хавхалантараççĕ.

Ялти клубсен, библиотекăсен, вулав çурчĕсен, хĕрлĕ кĕтессен ĕçне тĕпренех лайăхлатмалла. Вĕсем, партипе правительство йышăннă постановленисем çинчен массăсене ăнлантарса парас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тунипе пĕрлех, ялхуçалăх наукине, малта пыракан опыта пропагандăлакан центрсем пулса тăмалла. Ялти культура учрежденийĕсен политикăлла-массăлла ĕçĕн пур формисемпе те усă курмалла. Докладсем, лекцисем, каласусем ирттерессине, радио итлессине, хаçат-журнал вулассине лайăх йĕркеленипе пĕр вăхăтрах, халăх нумайĕн пухăнакан вырăнсенче наглядлăй агитацие организацилемелле. Политикăлла агитацие халăхăн мĕнпур сийĕсем хушшинче туса пымалла.

КПСС райкомĕсен агитколлектив руководителĕсен, агитаторсен семинарĕсемпе районти пухăвĕсене тăтăшах ирттермелле, вĕсенче агитколлективсем умĕнче тăракан задачăсене сӳтсе явмалла, уйрăм агитаторсен опычĕсене пĕтĕçтерсе сармалла.

Юлашки вăхăтра КПСС райкомĕсем чылайăшĕ политикăлла ĕçе ертсе пырассине лайăхлатрĕç. Шупашкар, Ишлей, Муркаш, Красноармейски райкомĕсем политикăлла ĕçе хуçалăх задачисемпе çыхăнтарса, ăна конкретлă ĕçсемпе çирĕплетсе пыраççĕ. Анчах пур районсенче те ун пек мар. КПСС Пăрачкав, Сĕнтĕрвăрри, Çĕмĕрле райкомĕсем партипе правительство йышăннă постановленисене массăсене ăнлантарса парас тĕлĕшпе сителĕксĕр ĕçлеççĕ. Нумай ялсенче докладсемпе каласусем сайра-хутра çеç ирттереççĕ.

Парти организацийĕсен хайсен пĕтĕм ĕçне колхозсемпе МТС-сенче малта пыракансем çине, çĕрĕçпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн мастерĕсем çине таянса туса пымалла. Политикăлла-массăлла ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе коммунистсемпе комсомолецсене колхоз производствин тĕп участокĕсем тăрăх тĕрĕс вырнаçтарса тухни пысăк вырăн йышăнать. Вĕсене пурне те агитаци ĕçне активлăн тата куллен тутшăнтармалла. Колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем тата кашни коммунист ялти культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕн шайне çĕклеме, библиотекăсемпе клубсен ĕçне лайăхлатма, кинофильмсем тăтăшах кăтартмалла тума, ялсене радио кĕртес ĕçе вăйлатма куллен тăрăшмалла.

Ялти политикăлла-массăлла ĕçе сӳлĕ пусăма çĕклени социализмла ялхуçалăхне малалла аталантарас задачăсене хăвăрт тата тĕплĕн пурнăçлама пулăшĕ.

Государствăна çĕрулми памалли плана тултарнă

КРАСНОАРМЕЙСКИ. (Телеграфпа). Районти ĕçсыннисем, КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсемпе хавхаланса тата Октябрь уявĕ ячĕпе социализмла ăмăртăва хутшăнса, государствăна çĕрулми тата пахча çимĕç памалли плана срокчен тултарчĕç. Çĕрулми памалли плана 103 процент, пахча çимĕç памалли плана 102 процент тултарнă. Çав вăхăтрах государствăна çĕрулмипе пахча çимĕçсем нумай сутнă.

* * *

КУСЛАВККА. (Телеграфпа). Районти колхозсем тата колхозниксем государствăна çĕрулми памалли плана 101.7 процент, пахча çимĕç памалли плана 160 процент тултарнă. Государствăна çĕрулми 160 тонна, пахча çимĕç 55 тонна сутнă.

УЯВ УМĔНХИ ПАСАРСЕМ

НАЛЬЧИК. (ТАСС). Кунта уяв умĕнхи пасарсем уçăлнă. Пасарсене Кабардин АССР-ĕнчи, Ставрополь крайĕнчи, Грузири, Дагестанри колхозсемпе колхозниксем хутшăнаççĕ. Сутма ăш-какай, çăнăх, чĕрĕ тата пуснă кайăк-кĕшĕк, ӳсентăран çăвĕ, пыл, улма-çырла, çĕрулми пахча çимĕç, хĕрлĕ эрех, сĕт продукчĕсем нумай илсе килнĕ. Иртнĕ çулхи çак тапхăрпа танлаштарсан, апат-çимĕç хакĕсем вăтам шутпа 20—30 процент йӳнелнĕ.

Хулари суту-илӳ тата коопераци организацийĕсен пасара промышленность таварĕсем нумай илсе килнĕ.

ТĂВАН ÇĔРШЫВРА

Апат-çимĕç таварĕсен промышленноçĕнчи работниксен Пĕтĕм Союзри канашлăвĕ

Октябрĕн 31-мĕшĕнче Мускавра Союзсен Çуртĕн Колоннăллă залĕнче апат-çимĕç таварĕсен промышленноçĕнчи работниксен Пĕтĕм Союзри канашлăвĕ уçăлнă. Канашлу апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине ӳстерес тата вĕсен пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен сӳтсе явать.

Канашлу ĕçне промышленноçри инженерсемпе техниксем, производствăн тĕрлĕ отраслĕсенчи предприятисенчи новаторсем, министерствăри ертсе пыракан работниксем, союзлă тата автономлă республикăсенчи апат-çимĕç таварĕсен промышленность министрĕсем, главнăй управленисен начальникĕсем, предприятисен директорĕсем, наукăпа тĕпчев институчĕсенчи работниксем 1.200 çын ытла хутшăнаççĕ.

Канашлу ĕçне СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ А. И. Микоян юлташ хутшăнать.

Апат-çимĕç таварĕсен промышленноçне аталантарасси тата апат-çимĕç продукчĕсен ассортиментне пысăклатасси, вĕсен пахалăхне лайăхлатасси çинчен СССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министрĕ В. П. Зотов юлташ доклад тунă.

Апат-çимĕç таварĕсен промышленноçĕ, уйрăмах вăрçă хыççăнхи çулсенче, нумай ӳснине, продукци туса кăларассине ӳстерес тата унăн пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе тунă ситĕнӳсене палăртса, докладчик промышленноçăн тĕрлĕ отраслĕсен ĕçĕнчи ситменлĕхсем çинчен тĕплĕн чарăнса тăнă. Зотов юлташ апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине ӳстерессипе тата вĕсен пахалăхне лайăхлатасси çинчен СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановление пурнăçлас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене тĕплĕн сӳтсе явса панă.

Доклад тăрăх пренисем пуçланнă. Прение çаксем тухса каланă: Ленинградри С. М. Киров ячĕпе тăракан аш-какай комбиначĕн директорĕ Бурцев юлташ, «Мурманрыба» тресчĕн траловăй флочĕн главнăй инженерĕ Копач юлташ, Ростов облаçĕнчи «Заготскот» кантурĕн управляющийĕ Апаршин юлташ, Курскри сахăр кăшманĕпе сахăр тресчĕн управляющийĕ Москаленко юлташ, Краснодар крайĕнчи пулă тытакан колхозсен союзĕн председателĕ Власов тата ыттисем те.

Канашлу малалла пырать. (ТАСС).

Çăмăл промышленноçри работниксен Пĕтĕм Союзри канашлăвĕ

Октябрĕн 31-мĕшĕнче Мускавра çăмăл промышленноçри работниксен Пĕтĕм Союзри канашлăвĕ хупăннă. Вăл виçĕ куна пынă.

СССР Куллен кирлĕ промышленность таварĕсен министрĕ А. Н. Косыгин юлташ хăйĕн докладĕнче çăмăл промышленность умĕнче тăракан задачăсем çинчен тата СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ «Куллен кирлĕ промышленность таварĕсем туса кăларассине ӳстерессипе тата вĕсен пахалăхне лайăхлатасси çинчен» йышăннă Постановление пурнăçлас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен тĕплĕ чарăнса тăнă.

Косыгин юлташ çакна палăртнă: куллен кирлĕ тĕп таварсем туса кăларас тĕлĕшпе пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план заданийĕсем срокчен пурнăçланаççĕ. Пурçăн пир-авăр туса кăларас енĕпе промышленность 1955 çул валли палăртнă шая ситнĕ ĕнтĕ. Çăм пир-авăр, çĕленĕ япаласем тата трикотаж изделийĕсем туса кăларас тĕлĕшпе пилĕкçуллăх заданийĕ тăватă çулта пурнăçланать. Ситес икĕ çул хушшинче çĕр мамăк пир-авăрĕ туса кăларасси 1 миллиард метр чухлĕ ӳсет. 1956 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, пурçăн пир-авăр пилĕк хут ытла нумайрах туса кăлармалла. Çăм пир-авăр, сăран атă-пушмак, трикотаж, тумтир тата ытти таварсем туса кăларасси малалла ӳсет.

Куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли анлă программăна пурнăçлама 400 яхăн предприяти тăваççĕ, 800 ытла фабрикăсемпе комбинатсене çĕнетеççĕ тата пысăклатаççĕ. 1954 çулта, кăçалхипе танлаштарсан, капитальнăй ĕçсем тума хывакан укса-тенкĕ хисепĕ икĕ хут ытла ӳсет. Çĕнĕрен 100 пысăк предприяти тума пуçлаççĕ.

Халăх нумайтарах ыйтакан таварсем: таса çăмран тĕртнĕ пир-авăр, меланжевăй тата çиĕ çемçе йышши пир-авăр, фланель, штапельнăй пир-авăр рантлă атă-пушмак, пахарах йышши çĕленĕ япаласем туса кăларасси çине тимлĕ пăхаççĕ.

А. Н. Косыгин чылай предприятисен ĕçĕнчи пысăк ситменлĕхсене кăтартса панă. Чылай предприятисем производствăри шалти резервисемпе туллин усă курмаççĕ. Оборудовани тухăçлăхне ӳстерес, ĕç вăйĕ нумай ыйтакан ĕçсене механизацилес, ĕçе лайăхрах организацилес, производствăри новаторсемпе малта пыракан предприятисен опытне сарас тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле-ха.

Промышленноçри мĕнпур работниксен таварсен пахалăхне лайăхлатас, уйрăмах вĕсене хитререх тăвас, ассортиментне пысăклатас ыйтусем çине тимлĕ пăхмалла. Халĕ питех те лайăх продукци туса кăларассишĕн ăмăрту сарăлнă. Бу ăмăртăва çакăн пек йĕркелемелле: фабрика маркин чысĕшĕн кашни работник ответлăх туйса тăтăр. Предприятисен коллективĕсем сорт енчен плана вăтам шутпа тултарассишĕн кăна мар, кашни метр пир-авăр, кашни мăшăр атă-пушмак пахалăхĕшĕн, кашни костюм, кĕпе, чăлха тата çăмăл промышленность туса кăларакан ытти япаласен кашнин пахалăхĕшĕн кĕрешчĕр.

Доклад тăрăх пренире аллă çынна яхăн тухса каланă.

Тухса калакансем çакна палăртнă: партипе правительство халăха кирлĕ таварсем туса кăларассине хăвăрт вăйлатас тĕллевпе йышăннă решенисемпе хавхаланса, çăмăл промышленноçри работниксем социализмла ăмăртăва анлă сарса янă. Вĕсем халех пурнăçламалли тата хисеплĕ задачăна—2—3 çул хушшинче халăха пир-авăр, тумтир атă-пушмак тата халăх нумай ыйтакан ытти промышленность таварĕсем парса тăрассине татăклăн вăйлатас задачăна—пурнăçлама пĕтĕм вăя хураççĕ.

Канашлăва хутшăннисем çĕнĕ предприятисем тăвас тата киввисене çĕнетес, вĕсене малта пыракан техникăпа хĕçпăшаллантарас, кадрсем хатĕрлес ыйтусем çинче нумай чарăнса тăнă.

Тухса калакансем хăйсен сăмахĕсенче машинăсем тăвакан предприятисем çăмăл промышленноçа оборудовани сителĕклĕ парса тăманнине, çавăн пекех хими промышленноçĕ çăмăл промышленность ыйтăвĕсене япăх тивĕстернине палăртнă. Хими промышленноçĕ хитре, кăйман сăрăсем, изделисен пахалăхĕпе ассортиментне лайăхлатма кирлĕ ытти химикатсем тĕлĕшпе çăмăл промышленноçăн ыйтăвĕсене сителĕксĕр тивĕстерет.

Канашлăва хутшăннисем продукцин пахалăхĕпе ассортиментне, планлас тата производствăна организацилес ĕçе, предприятисене чĕртаварпа материалсем парса тăрассине, рабочисемпе специалистсем хатĕрлессине лайăхлатас тĕллевпе тата ытти ыйтусем тĕлĕшпе практикăлла нумай сĕнӳсем панă.

СССР Куллен кирлĕ промышленность таварĕсен министрĕ А. Н. Косыгин юлташ юлашки сăмах каланă. (ТАСС).

М. В. Фрунзе ячĕпе тăракан Çар академийĕнчен вĕрентсе кăларни

Октябрĕн 31-мĕшĕнче Совет Çарĕн Центральнăй театрĕнче М. В. Фрунзе ячĕпе тăракан çар академийĕнче вĕренекенсен тата профессорсемпе преподавательсен савăнăçлă пухăвĕ пулнă. Савăнăçлă пухăва М. В. Фрунзе ячĕпе тăракан çар академийĕнчен вĕрентсе кăларнă ятпа ирттернĕ. Пухăва ССР Союзĕн Оборона министерствин тĕп управленийĕсен, çар академийĕсен представителĕсем, çавăн пекех Мускав хулинчи партипе совет организацийĕсен представителĕсем пынă. Савăнăçлă пухăва çар академийĕн начальникĕ генерал-полковник А. С. Жадов уçнă.

Кăçалхи çул М. В. Фрунзе ячĕпе тăракан çар академийĕ çар ĕçне туса пыма питĕ лайăх хатĕрленнĕ специалистсен çĕнĕ отрядне вĕрентсе кăларать. Совет Çарĕ Академирен вĕренсе тухнă офицерсен çĕнĕ йышне илет, вĕсем, çар ĕçĕн аслă шкулĕнчен ăнăçлă вĕренсе тухнă, унччен вăхăтра Аслă Отечественнăй вăрçăра пулса пуян опыт пухнă.

Савăнăçлă пухура ССР Союзĕн Оборона Министрĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Н. А. Булганин сăмах тухса каланă. Ăна пухура пулнисем ăшшăн кĕтсе илнĕ.

Н. А. Булганин юлташ офицерсене Академирен вĕренсе тухнă ятпа, профессорсемпе преподавательсене Совет Çарĕ валли пысăк квалификациллĕ çар специалисчĕсен çĕнĕ отрядне хатĕрлес йывăр та хисеплĕ задачăна пурнăçланă ятпа саламланă. ССР Союзĕн Оборона Министрĕ пухура пулнисем умне Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсен çапăçу хатĕрлĕхне малалла ӳстерес тĕлĕшпе задачăсем кăларса тăратнă, Академирен вĕренсе тухакансем хăйсен пĕтĕм вăйĕпе пултарулăхне Совет государствин оборона хăватне ӳстерсе пырас ĕçе парĕç, совет офицерĕн чыслă ятне таса тытĕç, çар сыннин тивĕçне тата çар уставĕсем хушнисене пурнăçлас тĕлĕшпе ырă пример кăтартса пырĕç, тенĕ.

Савăнăçлă пуху хыççăн ССР Союзĕн Оборона Министрĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Н. А. Булганин М. В. Фрунзе ячĕпе тăракан çар академийĕнчен вĕренсе тухакансене тата профессорсемпе преподавательсене йышăннă. Йышăнура Мускаври театрсенчи чи лайăх вăйсем тата Совет Çарĕн юрăпа ташă ансамблĕ хутшăннипе пысăк концерт ирттернĕ.

Йышăну питĕ лайăх иртнĕ. (ТАСС).

ОКТЯБРЬ УЯВĔ УМĔНХИ ĂМĂРТУ

Стахановла вахтăра

УЛАТĂР. (Телефонпа). КПСС Центральнăй Комитечĕ Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнă ятпа чĕнсе каланисене пăравуссем юсакан завод коллективĕ пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илчĕ. Çак кунсенче пăравуссем юсакан рабочисем праçник умĕнхи стахановла вахтăна тăчĕç, вĕсем ĕçре çĕнĕ ситĕнӳсем тăваççĕ. Октябрĕн 28-мĕшĕнче тимĕрçĕ цехĕнчи коммунист С. Игнатьев мастер смени пысăк ситĕнӳ турĕ. Вăл ертсе пыракан тимĕрçĕсем, молотобоецсем, прессовщиксем тата рессорщиксем сменăри нормăна 296 процент тултарчĕç.

А. Шуйкин тимĕрçĕпе Н. Горбунов молотобоец, иккĕн пĕрле ĕçлесе, заводра халиччен пулман пысăк ситĕнӳ турĕç — нормăна 608 процент тултарчĕç. Вĕсем пĕр смена хушшинче 266-шар тенкĕ ĕçлесе илнĕ.

Октябрĕн 29-мĕшĕнче С. Игнатьев мастер сменинчен те пысăкрах ситĕнӳ туни паллă пулчĕ. Мокшановпа Козлов мастерсен сменисем нормăна 356—360 процент тултарчĕç.

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура заводри пур цехсем те çĕнĕ ситĕнӳсем тăваççĕ. Завод октябрĕн 29-мĕшĕнче, срокчен 2 кун маларах, октябрь уйăхĕнчи тата вунă уйăхри плана ăнăçлăн тултарса ситерчĕ.

К. ПАВЛОВ.

Ĕçри ситĕнӳсем

КОМСОМОЛЬСКИ. Районти промкомбинатра тата промысла артелĕсенче Октябрь уявĕ умĕнхи социализмла ăмăрту анлăн сарăлнă. Райпромкомбинат иртнĕ уйăхри плана 153 процент тултарчĕ. Уйрăмах кирпĕч тăвакансем пысăк ситĕнӳ турĕç. Кирпĕч хĕртнĕ çĕрте ĕçлекен П. Долгов юлташ, пĕр уйăх хушшинче пĕччен 28 пин кирпĕч хĕртсе, плана 120 процент ытла тултарчĕ. Ф. Ухтяковпа И. Самаркин юлташсем çуна тунă çĕрте ĕçлесе, уйăхри плана ирттерсе тултарчĕç.

«Заря», «КИМ» промысла артелĕсем те аван ĕçлеççĕ.

Л. ТАЛЛЕРОВ.



ШУПАШКАРТИ ЭЛЕКТРОАППАРАТУРА ЗАВОДĔНЧЕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: социализмла ăмăртура малта пыракан рабочи С. Орлов юлташ. Вăл 3 çул хушшинче 6 çулталăк нормине тултарнă.

С. ВИКТОРИНОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Электроаппаратура завочĕ 11 уйăхри плана тултарчĕ

Шупашкарти электроаппаратура завочĕн коллективĕ, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмла ăмăртăва хутшăнса, пысăк обязательствăсем илнĕччĕ. Аслă уяв умĕнхи кунсенче заводри рабочисем, инженерсемпе техниксем пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. Вĕсем ĕçри хастарлăха ӳстернĕçемĕн ӳстерсе пыраççĕ.

Пĕтĕм коллектив çине тăрса ĕçлени илнĕ обязательствăсене пурнăçлама май пачĕ. Октябрь уйăхĕнчи производство планне завод 105,9 процент тултарчĕ. Ăмăртăва хутшăнса, 11 уйăхри производство планне ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илнĕччĕ. Завод коллективĕ çак обязательствăна срокчен — ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарса ситерчĕ.

Çак пысăк ситĕнӳ рабочисем, инженерсемпе техниксем хастарлă ĕçлениччен, Тăван çĕршывăн экономикăлла вăй-хăватне малашне ӳстерессишĕн çине тăрса кĕрешнинчен килчĕ. Заводра стахановецсемпе ударниксен йышĕ пĕтĕм рабочисен 74 процентĕ чухлĕ шутланать. Икĕ çул та тăхăр уйăх хушшинче 200 çынна яхăн пилĕк çуллăх нормăна тултарнă.

Октябрь уявĕ умĕн илнĕ обязательствăсене электроаппаратура пухакан иккĕмĕшпе виççĕмĕш цехсем, штамповочнăй, фотохими, металлурги цехĕсем пуринчен малтан пурнăçларĕç.

Завод коллективĕ çулталăкри производство планне срокчен тултарассишĕн кĕрешет.

Чугунçул станцинче

Шупашкарти чугун çул станцийĕн коллективĕ грузсем тиесе ăсатмалли çулталăкри плана октябрĕн 8-мĕшĕ тĕлне тултарнă. Колхозсемпе колхозниксене тата потребительсен кооперацине çĕрулми ăсатма планран ирттерсе 160 вагон ытла уйăрса панă.

Уяв умĕнхи ăмăртура уйрăмах аслă стрелочница, хула Совечĕн депутачĕ Е. Степанова юлташ, ВЛКСМ членĕ Н. Минаев составитель, пăравус машинисчĕ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ А. Сторублев юлташ, станци дежурнăйĕсем М. Александровпа А. Петриченко юлташсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Т. МОИСЕЕВ.

Халăх валли паха продукци

СĔНТĔРВĂРРИ. «Портной» артель членĕсем 10 уйăхри плана срокчен, октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне тултарчĕç. Çĕвĕçсем халăх валли лайăх кĕпе-тумтир ытларах çĕлеме тăрăшаççĕ. Н. Китаева, А. Хохлова, А. Кузнецова тата ытти нумай çĕвĕçсем нормăна куллен 125 процент тултараççĕ.

Артельте производствăна механизацилес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ. Çĕвĕ çĕлемелли машинăсене электричество вăйĕпе ĕçлеттерме 10 мотор лартаççĕ. Ку вăл ĕç тухăçлăхне чылай ӳстерме май парать.

Районти промкомбинатри урапа-çуна тăвакан цехра икĕ пресс вырнаçтарса лартнă, ытти цехсенчи ĕçсене те механизацилеççĕ. Прессем ĕçлеме тытăннă хыççăн кустăрмасем тăвасси икĕ хут ытла ӳснĕ.

Комбинат колхозсем валли парник рамисем, выльăх-чĕрлĕх çурчĕсем валли чӳрече рамисем туса кăларма, колхозсене урапа-çуна юсаса пама хатĕрленет.

Çак кунсенче «Крестьянский кузнец», «Лесоруб» артель членĕсем те пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ.

М. ТИТОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Ишлей районĕнчи парторганизацин конференцийĕ

Ишлей районĕнчи парторганизацин VII-мĕш конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференцире КПСС райкомĕн ĕçĕсем çинчен райком секретарĕ В. Дмитриев юлташ доклад турĕ.

— Районти ĕçсыннисем,—тет докладчик,—пĕтĕм совет халăхĕ пекех, партин XIX-мĕш съездĕ йышăннă историллĕ решенисене тата КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановлене çав тери пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илчĕç. Çак документсен хуçалăхпа культура строительствинче çĕнĕ çĕнтерӳсем тумалли аслă программа пулса тăраççĕ.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви палăртнă программăран тухса тăракан пысăк задачăсене пурнăçласа, Ишлей районĕнчи парторганизаци пысăк ĕçсем туса ирттерчĕ. Районти пуçламăш парторганизацисем çирĕпленсе пынă май вĕсен организаторла рольне вăйĕ те чылай ӳсрĕ.

Парти организацийĕсем ертсе пынипе районти колхозсем тырпул тухăçлăхне, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ӳстерчĕ, государствăна тырă памалли плана ытти çулхисенчен чылай ăнăçлăрах, август уйăхĕнче тултарчĕ. 1953 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне район выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство панă плана пур выльăхсем енĕпе те тултарнă, выльăх витисем тумалли кăçалхи задание, пĕтĕмĕшпе илсен, 105 процент пурнăçланă. Машина-трактор станцийĕ хăватлă техникăпа лайăхрах усă курма тытăннă. Чылай колхозсем курăксем акса тăвакан пусă çаврăнăшĕсене тĕрĕс йĕркелесе ситерчĕ. Нумай çул ӳсекен курăксем акакан лаптăк пысăкланнă.

Пуçламăш парторганизацисем партилле-политикăлла тата партилле-организацилле ĕçсене вăйлатни хуçалăхри ытти ĕçсенче те палăрать. Районти колхозсем çул-йĕр строительствин планне ирттерсе тултарнă.

Докладчикпа прениве тухса калакансем ялхуçалăхĕпе культура строительствинче ертсе пырас ĕçре пысăк ситменлĕхсем пуррине палăртрĕç. КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ палăртнă ситменлĕхсем Ишлей районĕнчи парторганизацие тӳррĕнех пырса тивеççĕ.

Райком хăшпĕр колхозсем юлса пынин сăлтавĕсене вăхăтра тĕпчесе вĕренмест, юлса пыракан колхозсене малти ретe тухмалла тăвас тĕлĕшпе кирлĕ чухлĕ пулăшмасть. Чапаев ячĕпе, Маленков ячĕпе, Владимир Ильич ячĕпе тăракан, «Дружба», «Знамя», «Заря коммунизма», «Активист» колхозсен обществăлла хуçалăхĕ ситĕлĕксĕр аталанса пыни çак колхозсене парторганизацисем тивĕçлипе ертсе пыманнинчен килнĕ. Ку колхозсенче тырпул тухăçлăхĕ начар, вĕсенче колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх тырпулпа ытти çимĕçсем сахал валеçсе параççĕ.

— Парти райкомĕпе райсовет исполкомĕ юлса пыракан колхозсене уйрăммăн пулăшмаççĕ, «пĕтĕмĕшле майсемпе» ертсе пыраççĕ,—тет делегат Малютин юлташ.— Ертсе пырас ĕçре кампанилле меслетпе усă курни те райком ĕçĕнче пысăк ситменлĕх пулса тăрать. Мĕнле те пулсан кампанилле ĕç тунă чухне районтан тăтăшах представительсем пыраççĕ, ĕçе хăвăртлатма хистеççĕ. Çав ĕçе туса ситерсен вара, вĕсем колхозсене нумай вăхăт хушши пырса курăнмаççĕ.

Андреев ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци секретарĕ Романов юлташ та парти райкомне ертсе пырас ĕçе КПСС Центральнăй Комитечĕ кăтартса панă пек çĕнетсе улăштарманшăн критиклерĕ. Уйрăм работниксем колхозсене пырсан пĕр еверлĕ ĕçпе кăна интересленеççĕ.

Парти райкомĕпе пуçламăш парторганизацисем выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе шалти мĕнпур майсемпе усă курмаççĕ. Хăшпĕр колхозсем, уйрăмах Чапаев ячĕпе, Маленков ячĕпе, Андреев ячĕпе тăракан, «Знамя» колхозсем юлса пыраççĕ. Ку колхозсенчи парторганизацисем выльăх-чĕрлĕх фермисене механизацилес енĕпе ситĕлĕксĕр ĕçлеççĕ.

— Партипе правительство колхозсене организацилле хуçалăх енчен вăйлатса пыма, колхозниксемпе колхозницăсен пурнăçне лайăхлатма çав тери пысăк майсем туса пачĕç. Ялхуçалăх налогне чакарнипе пулах кăна пирĕн районти ĕçсыннисем икĕ миллион тенке яхăн тупăш илеççĕ. Çакă вăл, мĕнпур совет халăхне хавхалантарнă пекех, ялхуçалăх ĕçченĕсене тата пысăкрах ӳсĕмсем тума, ĕç хастарлăхне ӳстерме хавхалантарать. Анчах та партин Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановлене тата Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе йышăннă ытти решенисене районти ĕçсыннисене ăнлантарса парас ĕç ситĕлĕксĕр пулса пырать. Çакă вăл районти парторганизаци ĕçĕнчи пысăк ситменлĕх. Хуçалăхри хăшпĕр ĕçсемпе юлса пынине, уйрăм колхозсем начар ĕçленине çакăнпа кăна ăнлантарса пама пулать,—тет Иванов юлташ.

Мамăш ял Совечĕн председателĕ Мишкина, Ленин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Кудряшов юлташсем районти парторганизацире колхоз председателĕсемпе пуçламăш парторганизаци секретарĕсене суйласа илес тата вĕсене воспитани парас ĕçре пысăк ситменлĕхсем пуррине палăртрĕç. Степанов юлташ МТС-ри кадрсен ответлăхне ӳстерсе пыма кирли çинчен каларĕ. Чылай механизаторсем ĕçе сиелтен тăваççĕ, ĕç пахалăхне лайăхлатассишĕн кĕрешмеççĕ. «Знамя», «Дружба» колхозсенче тырпул тухăçлăхĕ начар пулни пуринчен малтан МТС-ран килет. Кунпа пĕрлех Степанов юлташ колхозсенчи парторганизацисен рольне ӳстерме кирли çинчен каларĕ. Хăшпĕр колхозсенче парторганизацисем çук, уйрăм колхозсенчи парторганизацисем ытла та сахал йышлă.

Андреев юлташ ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçе лайăхрах ертсе пыма кирли çинчен каларĕ. Сăмăл промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçĕ валли продукци ытларах парса тăмалла тăвас тесен, парти райкомĕн хăйĕн ĕçне çĕнетсе вăйлатас пулать.

Суходолов юлташ Çĕктерти йывăç комбиначĕн коллективĕ Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви халăх ырлăхĕшĕн тăрăшнипе хавхаланса ĕçре ситĕнӳсем туни çинчен пĕлтерчĕ. Комбинат 9 уйăхри плана 115,3 процент тултарнă, коллектив çывăхри колхозсене пулăшас енĕпе чылай пысăк ĕçсем тăвать. «Урожай» колхоз председателĕ Петрова юлташ артель членĕсем ĕç тухăçлăхне ӳстерес, обществăлла хуçалăха çирĕплетес енĕпе ӳсĕмсем туни çинчен каларĕ. Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Якимов, машина-трактор станцийĕнчи партбюро секретарĕ Бондарев тата ытти юлташсем МТС ĕçĕнчи пысăк ситменлĕхсене палăртрĕç, ситменлĕхсемпе йăнăшсене пĕтермелли майсем çинчен каларĕç.

Конференци районти парторганизаци ĕçне лайăхлатмалли майсене палăртса решени йышăнчĕ, парти райкомĕн çĕнĕ составне суйларĕ.

КПСС райкомĕн организацилле пленумĕ парти райкомĕн секретарĕ пулма В. Д. Дмитриев, райком секретарĕсем пулма В. Ф. Федоров тата С. П. Самсонов юлташсене суйларĕ.

Н. НИКИТИН.

Агитаторсем ĕçре

СОВЕТСКИ. Хуçашри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительсем пурте Жданов ячĕпе тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсенче агитаторсем пулса ĕçлеççĕ. Шкулти пуçламăш парторганизаци агитаторсемпе кашни эрнерех канашлу ирттерет, агитаторсен ĕçĕ çинчен отчетсем итлет, агитаторсем умне тухса тăракан задачăсене сӳтсе явать. Агитаторсем СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн материалĕсене тата Г. М. Маленков юлташ каланă сăмаха ăнлантарас тĕлĕшпе колхозниксем хушшинче 21 доклад тата чылай калаçусем ирттерчĕ. Халĕ КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ «СССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен» йышăннă постановлене тата СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ юлашки вăхăтра йышăннă ытти постановленисене ĕçсыннисене тĕплĕн ăнлантарса параççĕ. Асăннă постановленисем тăрăх пурĕ 17 доклад тата калаçусем ирттерчĕ, вĕсене пурĕ 1.153 çын итлерĕ.

Халăх хушшинчи политикăлла-массăлла ĕçе Г. Копров, П. Лаврентьев, А. Смирнов коммунистсемпе партире тăман Л. Александрова, И. Степанов, Н. Громова юлташсем активлăн хутшăнаççĕ.

Партипе правительство халăх хуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе йышăннă постановленисемпе хавхаланса, Жданов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем уйхир ĕçĕсене ăнăçлăн ирттерчĕç, çĕрулмипе пахча çимĕçсене те вăхăтра пухса пĕтерчĕç, обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли икĕ вите çĕнĕрен туса лартрĕç.

А. СМИРНОВ,
çичĕ çул вĕренмелли шкулти парти организацийĕн секретарĕ.

Комсомол организацийĕн отчетпа суйлав пухăвĕ

КӲКЕÇ. Пĕрлешсе пысăкланнă «Победа» колхозри комсомол организацийĕн отчетпа суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта комсомол организацийĕн отчетлă тапхăрти ĕçĕсем çинчен ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ Е. Петрова юлташ тунă доклада сӳтсе яврĕç.

Отчетлă тапхăр хушшинче комсомол организацийĕн ĕçĕ ситĕлĕксĕр пулса пынă. Комсомолецсен пухăвĕсене виçĕ хутчен çеç ирттернĕ, усă пухусем пачах ирттермен, ĕçе плансăр туса пынă.

Георгий Евграфовпа Валерий Иванов комсомолецсем ВЛКСМ комитетне союзра тăман çамрăксене комсомол ретне илес тĕлĕшпе ситĕлĕксĕр ертсе пынăшăн хытă критиклерĕç. Комсомол организацийĕ иртнĕ отчетпа суйлав пухăвĕ пулнăранпа çĕнĕрен пĕр çамрăка та комсомол ретне илмен.

— Пирĕн организацире,—терĕ В. Михайлов,—комсомолецсем йышĕ ӳсменни чи малтан воспитани ĕçне ситĕлĕксĕр йĕркеленинчен килет. Союзра тăман çамрăксен пухăвĕсене кăçал ирттермен, политикăлла докладсем туса паман. Политшкулта 16 комсомолец кăна вĕренет. Союзра тăман пĕр çамрăка та вĕренĕве явăçтарман. Занятисем халĕ те пуçланман.

Отчетлă доклад тăрăх тухса калакансем физкультурăпа спорт тата ДОСААФ организацийĕн ĕçĕсенчи ситменлĕхсене пĕтерме пулăшакан сĕнӳсем пачĕç.

ВЛКСМ райкомĕ те колхозри комсомол организацийĕсен ĕçĕпе кирлĕ пек интересленмест.

Пуху ВЛКСМ комитечĕн ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ решени йышăнчĕ, вăрттăн сасăласа комсомол комитечĕн çĕнĕ составне тата комсомолăн районти конференцине кайма виçĕ делегат суйларĕ.

А. ТИМОФЕЕВ.

Ял Совечĕсен ăмăртăвĕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ ял Совечĕсен социализмла ăмăртăвĕн 1953 çулхи виççĕмĕш кварталти итогĕсене пăхса тухнă.

Ял Совечĕсен социализмла ăмăртăвĕнче Вăрнар районĕнчи Кĕтеснер ял Совечĕ, Элĕк районĕнчи Ехремкасси ял Совечĕ, Муркаш районĕнчи Йӳçкасси ял Совечĕ, Елчĕк районĕнчи Аслă Пăла Тимеш ял Совечĕсем малта тухнине палăртнă.

Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕк ял Совечĕ, Шăхасан районĕнчи Ухман ял Совечĕ, Октябрьски районĕнчи Урхас Кушкă ял Совечĕ, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Паникасси ял Совечĕ, Шăхасан районĕнчи Çĕнĕ Мами ял Совечĕ лайăх ĕçленине палăртнă.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ райисполкомсене ял Совечĕсен социализмла ăмăртăвне анлă сарма, кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах туса ситересси шĕн, колхозсенче выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма лайăх хатĕрленессишĕн, укçа-тенкĕ памалли обязательствăсене, ялхуçалăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене вăхăтра пурнăçлассишĕн, государствăн çул-йĕр строительстви планне тултарассишĕн, социально-культурăлла учрежденисен ĕçне лайăхлатассишĕн, халăх хуçалăхĕн 1953 çулхи планне ăнăçлă тултарассишĕн тимлĕн тăрăшма кирлине кăтартса панă.

„Коммунизм ялавĕ" хаçатра çырнă хыççăн

„Йывăç материалсем сутас ĕçе йĕркелемелле"

«Коммунизм ялавĕ» хаçатра октябрĕн 13-мĕшĕнче «Йывăç материалсем сутас ĕçе йĕркелемелле» ятлă статья пичетленнĕччĕ.

Союзлесторгăн Чăваш республикинчи базин дирекцийĕпе пуçламăш парторганизаци статьяра фактсене тĕрĕс кăтартса пани, складсем чылайăшĕ йывăç материалсем сутас ĕçе ситĕлĕксĕр туса пыни, халĕ ситменлĕхсене пĕтерме кирлĕ мерăсем йышăнни çинчен пĕлтерчĕç. Фондпа уйăрса паракан йывăç материалсем ситĕлĕксĕррине кура, Союзлесторгăн республикăри базин дирекцийĕ Мари республикипе ытти организацисенчен строительство материалĕ, хăма, вутă тата ытти материалсем ытларах илсе килмелле тума тăрăшать. Юлашки вăхăтра пиншер кубометр йывăç илсе килнĕ.

Кунсăр пуçне, Улатăрти складăн хăма çуракан заводĕнче ĕçсыннисене 1.590 кубометр хăма çурса сутнă.

Союзлесторгăн Чăваш республикинчи бази 9 уйăхри тавар çаврăнăш планне 108 процент, виççĕмĕш квартал планне—136 процент тултарнă.

Союзлесторгăн республикăри управленийĕ кунпа пĕрлех Главлесосбытăн республикăри управленийĕ фондпа уйăрса пама пăхнă йывăç материалсене чылай чухне вăхăтра уйăрса паманни çинчен пĕлтерчĕ.

* * *

«Йывăç материалсем сутас ĕçе йĕркелемелле» ятлă статьяра Йĕпреç вăрманпромхозĕ Воронеж облаçĕнчи Добрынски райпотребсоюзне ĕçе юрăхлă мар пĕренесем ăсатнă пулин те иккĕмĕш сорт материал вырăнне шутласа укçа тӳлеттерме счет тăратни çинчен çырнăччĕ.

Йĕпреç вăрманпромхозĕн дирекцийĕ статьяра çак факта тĕрĕс кăтартни çинчен пĕлтерчĕ. Добрынски вăрманпромхозне тĕрĕс мар шутласа илнĕ укçана каялла тавăрса панă. Йăнăш туса айăпа кĕнĕ Головин бухгалтера ответ тыттарнă.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн
УКАЗĔ
СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин Чăваш АССР-ĕнчи ертсе пыракан ответлă работникĕсене тата специалисчĕсене орденсемпе тата медальсемпе наградăласси çинчен

Хатĕрлев енĕпе нумай çулсем хушши лайăх ĕçленĕшĕн çаксене наградăлас:

ĔÇЛĔХ ХĔРЛĔ ЯЛАВ ОРДЕНĔПЕ

1. Самуил Андреевич Игорева—Вăрнар районĕнчи хатĕрлев уполномоченнăйне.
2. Иван Васильевич Карасева—«Заготзерно» Улатăр пунктĕнчи склад заведующине.

«ĔÇРИ ХАСТАРЛĂХШĂН» МЕДАЛЬПЕ

1. Иван Сергеевич Гарькина—«Заготзерно» Улатăр пункчĕн аслă механикне.
2. Елена Михайловна Хуторскаяна — Чăваш АССР-ĕнчи хатĕрлев уполномоченнăйĕн управлени секторĕн начальникне.

«ĔÇРЕ ПАЛĂРНĂШĂН» МЕДАЛЬПЕ

1. Петр Иванович Журина—«Заготзерно» Шупашкар пункчĕн директорĕн пахалăх енĕпе ĕçлекен заместительне.
2. Анна Владимировна Поповăна—Чăваш АССР-ĕнчи хатĕрлев уполномоченнăйĕн управленин инспектор-контролерне.
3. Семен Сергеевич Сергеева—«Заготзерно» Чăваш республикинчи кантурĕн управляющи заместительне.
4. Анастасия Ивановна Скитковăна — «Заготживсырьен» Вăрнар районĕнчи хатĕрлев кантурĕн аслă бухгалтерне.
5. Петр Нилович Соколова—Сĕнтĕр районĕнчи хатĕрлев уполномоченнăйне.
6. Георгий Николаевич Стрельникова—«Главхлопкольнопромăн» Чăваш республикинчи кантурĕн управляющине.
7. Иван Яковлевич Яковлева—Красноармейски районĕнчи хатĕрлев уполномоченнăйне.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. ВОРОШИЛОВ.
СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ Н. ПЕГОВ.

Мускав, Кремль. 1953 çулхи июлĕн 22-мĕшĕ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн
УКАЗĔ
Центросоюзăн Чăваш АССР-ĕнчи ертсе пыракан ответлă работникĕсене тата специалисчĕсене орденсемпе тата медальсемпе наградăласси çинчен

Нумай çулсем хушши лайăх ĕçленĕшĕн çаксене наградăлас:

«ĔÇРИ ХАСТАРЛĂХШĂН» МЕДАЛЬПЕ

1. Ольга Григорьевна Григорьевăна — потребсоюзăн Вăрмарти çăмартапа кайăк-кĕшĕк комбиначĕн çăмарта сортлаканне.
2. Алексей Павлович Софонова—Çĕрпӳ районĕнчи потребсоюз правленийĕн председательне.
3. Раиса Федоровна Федоровăна—потребсоюзăн Вăрмарти çăмартапа кайăк-кĕшĕк комбиначĕн çăмарта упаковщицине.

«ĔÇРЕ ПАЛĂРНĂШĂН» МЕДАЛЬПЕ

1. Юлия Кирилловна Горбуновăна — потребсоюзăн хатĕрлев управленийĕн аслă экономистне.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. ВОРОШИЛОВ.
СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ Н. ПЕГОВ.

Мускав, Кремль. 1953 çулхи сентябрĕн 19-мĕшĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Советĕнче
Промысла кооперацийĕпе инвалидсен кооперацийĕн артелĕсем 1953 çулхи виççĕмĕш кварталта ăмăртса ĕçленин итогĕсем çинчен

Промысла кооперацийĕпе инвалидсен кооперацийĕн артелĕсем 1953 çулхи виççĕмĕш кварталта социализмла ăмăртса ĕçленин итогĕсене пăхса тухса, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

ПРОМЫСЛА КООПЕРАЦИ АРТЕЛĔСЕМ ЕНĔПЕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Шупашкарти «Победа» артеле памалла тунă (правлени председателĕ Ф. Безубиков юлташ). Çак артель виççĕмĕш кварталта продукци туса кăлармалли плана 124,5 процент тултарнă, плана çирĕплетнĕ ассортиментсем тăрăх тултарнă, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 15 процент, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетмелли плана 10 процент, ваккăн тавар сутмалли плана 24,7 процент ирттерсе тултарнă, ВЦСПС-па Роспромсовет çирĕплетнĕ социализмла ăмăрту условийĕсене пур енĕпе те пурнăçланă.

Шупашкарти «Кооператор» артель лайăх ĕçленине палăртнă.

ВĂРМАН ПРОМЫСЛА КООПЕРАЦИЙĔН АРТЕЛĔСЕМ ЕНĔПЕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Шупашкарти Куйбышев ячĕпе тăракан вăрман промысла артелĕнчех хăвармалла тунă (правлени председателĕ А. Ефремов юлташ). Çак артель виççĕмĕш кварталта продукци туса кăлармалли плана 161,7 процент тултарнă, плана çирĕплетнĕ ассортиментсем тăрăх тултарнă, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 18,6 процент, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетмелли плана 0,4 процент ирттерсе, ваккăн тавар сутмалли плана 5.6 процент ирттерсе тултарнă, социализмла ăмăртăвăн ытти условийĕсене те пурнăçланă.

Канашри «1-ое Мая» артель тата Шупашкар районĕнчи Заводски урапа-çуна тăвакан артель лайăх ĕçленине палăртнă.

ИНВАЛИДСЕН КООПЕРАЦИЙĔН АРТЕЛĔСЕМ ЕНĔПЕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Вăрмарти «Трудовик» артельтех хăвармалла тунă (правлени председателĕ В. Цветков юлташ). Çак артель виççĕмĕш кварталта продукци туса кăлармалли плана 120,9 процент тултарнă, плана çирĕплетнĕ ассортиментсем тăрăх тултарнă, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 16 процент, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетмелли плана 10 процент ирттерсе, тултарнă, социализмла ăмăртăвăн ытти условийĕсене те пурнăçланă.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çакна палăртнă: Чăваштарпромсоюз (председателĕ Ф. Климов юлташ) тата Чăвашшвейпромсоюз (председателĕ М. Зарубин юлташ) социализмла ăмăртăва ситĕлĕксĕр ертсе пыраççĕ, çавна пула 1953 çулхи виççĕмĕш кварталти итогсем тăрăх асăннă системăсене кĕрекен артельсенчен пĕри те социализмла ăмăрту условийĕсене пурнăçламан. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулайман.

Суту-илӳ кадрĕсене суйласа илес тата воспитани парас ĕçе лайăхлатмалла

Партин XIX-мĕш съезчĕ пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче тата СССР Верховнăй Совечĕн V-мĕш сессийĕ йышăннă решенисенче пирĕн çĕршывра коммунизм тумалли аслă программăна палăртнă. Партипе Правительство йывăр промышленноçа малалла вăйлатса пынипе пĕрлех халăха куллен кирлĕ таварсем парса тăрассине татăклăнах ӳстерессишĕн, çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче рабочисемпе служащисен, интеллигенцин, мĕнпур совет çыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн мĕн-пур тăрăшаççĕ. Çав задачăсене пурнăçлас ĕçре совет суту-илĕвне вăйлатса пыни питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать.

«Пирĕн совет суту-илĕвĕ, — терĕ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕнче, — халăх интересĕсемшĕн тата ăна мĕн кирлине тивĕçтерессишĕн ĕçлет. Вăл социализмла обществăшăн ĕçлеме, социализмла производствăна аталантарса вăйлатас ĕçе пулăшма тата ăна халăха мĕн кирлипе çыхăнтарса пыма тивĕç. Государствăлла кооперацин çав тери йышлă магазинĕсемпе лавккисем, суту-илӳ склачĕсемпе базисем колхоз пасарĕсем урлă халăха пирĕн промышленноçпа ялхуçалăхĕ туса кăларакан нумай тĕрлĕ куллен кирлĕ таварсем сутаççĕ. Çавăнпа та совет суту-илĕвĕ государство промышленноçĕпе колхозла ялхуçалăхĕ хушшинчи производствăлла-экономикăлла çыхăнусен пĕтĕм системинче те çав тери пысăк вырăн йышăнса тăрать».

Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви совет суту-илĕвне вăйлатас ыйтусемпе [illegible] ĕçлеççĕ, суту-илӳ тумалли таварсен хисепне пĕрмаях ӳстереççĕ, апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен хакне тăтăшах йӳнетсе пыраççĕ. Суту-илӳ предприятийĕсем нумайланаççĕ. Государство суту-илӳ тума, 1953 çулхи апрель-декабрь уйăхĕсем валли уйăрса панă 312 миллиард тенкĕлĕх таварсăр пуçне, тата питĕ нумай тавар уйăрса парать.

Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви советла суту-илĕве вăйлатма тăрăшнине СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ «Советла суту-илĕве малалла аталантарса пымалли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени те лайăх кăтартса парать.

Çĕнĕ постановленире хальхи вăхăтри задачăсене палăртса хунă: советла суту-илĕве хăвăртрах малалла аталантармалла, çапла вара çывăхри икĕ-виçĕ çул хушшинче халăха кирлĕ таварсене кашни хулара тата районта пĕр чăрмавсăр сутса тăмалла туса ситермелле, тавар илекенсемшĕн лайăхрах тăрăшмалла тата тавар илекенсен ӳсе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтермелле, техникăпа лайăх пуянлатнă кучухнехи суту-илӳ предприятийĕсем нумай усмалла тата куллен кирлĕ япаласен ӳсе пыракан хисепне — промышленноçпа ялхуçалăхĕ туса кăларакан япаласене тавар илекенсем патне хăвăрт ситерессине организацилемелле.

Халĕ ĕнтĕ пирĕн умра суту-илĕве организацилес ĕçри ситменлĕхсене хăвăртрах пĕтерсе пырас задача тăрать. Ĕçсыннисем мĕнле тавар ыйтнине тĕплĕн шута илмелле, таварсене кирлĕ çĕре вăхăтра вырсе кирмелле. Магазинсемпе столовăйсенче ĕçлесси, ĕçсыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтересси хисеплĕ те пысăк ĕç пулса тăрать.

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановленире государствăпа кооперации суту-илĕвĕнчи работниксен кадрĕсемпе ĕçлессине мĕнле йĕркелемеллине те кăтартса панă.

Совет суту-илĕвне вăйлатас, суту-илӳ предприятийĕсен мĕнпур ĕçне лайăхлатас задача кадрсене суйласа илсе вĕсене воспитани парассине тăтăшах лайăхлатса пыма хушать. Суту-илӳ организацийĕсен руководителĕсен çакна яланах асра тытас пулать.

Работниксен ĕçлĕ пахалăхне лайăхлатасси, суту-илӳ предприятийĕсене партипе государство интересĕсене парăнса ĕçлекен, парти политикине пурнăçа кĕртме тăрăшакан кадрсемпе çирĕплетесси—партипе совет органĕсен тивĕçĕ пулса тăрать.

Парти кăтартăвĕсене пурнăçласа пынă май, суту-илӳ предприятийĕсене лайăх кадрсемпе çирĕплетес тĕлĕшпе чылай пысăк ĕçсем тунă. Суту-илӳ ĕçĕнчи работниксен квалификацийĕ тата пĕлĕвĕпе культури чылай ӳсрĕ.

Анчах кадрсем суйласа илес тата вĕсене воспитани парас ĕçре ситменлĕхсемпе пысăк йăнăшсем те сахал мар-ха. Нумай суту-илӳ организацийĕсен руководителĕсем кадрсене политикăлла тата ĕçлĕ пахалăх тăрăх суйласа илмелли парти принципне пăсаççĕ, ку ĕç çине тимсĕррĕн пăхаççĕ.

Кадрсене суйласа илнĕ чухне йăнăш тунине пула та ĕнтĕ суту-илӳ предприятийĕсене ертсе пырас ĕçе е ытти ответлă вырăнсене юрăхсăр этемсем пырса лекеççĕ. Руководительсем тĕрĕслесе тăманнине пула вара ун пек шанăçсăр этемсем государство тата кооперации пурлăхне çаратма пăхаççĕ.

Чăвашторгăн Канашри уйрăмĕнче магазин заведующийĕ пулма М. Гимаев текенскере шанса панă. М. Гимаев унччен Комсомольски райпотребсоюзĕнче ĕçленĕ. Ăна унтан растрата тунă пирки кăларса янă пулнă. Унсăр пуçне, çак çын колхоз пурлăхне те вăрланă пулнă. М. Гимаев Чăвашторгăн Канашри уйрăмĕн магазинне ĕçлеме пыричченех государство укçине 28 пин тенкĕ вăрланă пулнă. Çапах та Чăваштор руководителĕсем ăна магазин шанса панă. Чăвашторгăн Канашри уйрăмĕнчех А. Новеренов ятлă çынна ним документсемсĕр-мĕнсĕрех ĕçе илсе склад заведующийĕ пулма лартнă. Çак жулик, руководительсем çăвар карса ларнипе усă курса, 59 пин тенкĕ чиксе тухса тарнă.

Чăвашторгăн Сĕмĕрлери уйрăмĕнче те кун пек йĕркесĕрлĕхсем чылай. Кунта Карнаушенкова ятлă çынна, унччен хуларн мунчара ĕçлесе 10 пин тенкĕ растрата тунăскерне, буфетчицăна лартнă. Вăл çĕнĕ ĕçре пăртак ĕçлесех 11 пин тенкĕ государство укçине хăйĕн çумне чикнĕ те аякка тухса тарнă. Çак уйрăмрах Н. Васильева продавщица растрата тунă пулнă. Анчах та, çирĕп ответ тыттарас вырăнне ăна, ку ĕçрен хăтарса, материалсемшĕн ответлă пулмалли урăх ĕç шанса панă. Торгăн экспедиторĕ пулма ĕлĕк растрата тунă, суя документсем туса 14 пин тенкĕ государство укçине хăйĕн кĕсйине чикнĕ Ананьева шанса панă.

Шупашкарти столовăйсемпе ресторансен трестĕнче 4-мĕш столовăйри склад заведующăйĕ пулнă Моксеев 4.5 пин тенкĕлĕх продуктсем салатса пĕтернĕ. Анчах та ăна ответ тыттарас вырăнне 12-мĕш столовăйăн директорĕ пулма уйăрса лартнă.

Кун пек тĕслĕхсем тата кăтартса пама пулать. Мĕн çинчен калаççĕ-ха вĕсем? Суту-илӳ организацийĕсенчи руководительсем кадрсем суйласа илнĕ чухне тимсĕрлĕ пулаççĕ, хăшпĕр чухне шанăçсăр та киревсĕр шухăшлă çынсене хăйсем хӳтĕлесе пыраççĕ, айăпланнă çынсене пысăк ĕçсем шанса параççĕ.

Хăшпĕр суту-илӳ организацийĕсенче работниксене туслă пулнипе, пĕр-пĕрне килĕштернипе, пĕр вырăнти çынсем тата тăван-хурăнташсем пулнипе ĕçе илни те пулкалать. Кун пек тĕслĕхсем уйрăмах Вăрнар райпотребсоюзĕпе Чăвашторгăн Канашри уйрăмĕнче ытларах тĕл пулаççĕ. Кунти суту-илӳ предприятийĕсене çынсене туслă е хурăнташлă пулнипе ĕçлеме илеççĕ. Çапла туни вара пĕр-пĕрин йăнăшĕсемпе айăпĕсене пытарса пурăнмалли май туса парать. Çакăн пек йĕркесĕрлĕхе татăклăнах пĕтерес пулать. Суту-илӳ работникĕсене суйласа илессине парти хушнă принципсем тăрăх туса пымалла.

Суту-илӳ организацийĕсемпе предприятийĕсенче хĕрарăмсем сахал мар ĕçлеççĕ. Анчах та ертсе пыракан вырăнсене хĕрарăмсене суйласа лартас ĕç ситĕлĕксĕр пулса пырать. Районсемпе хуласенчи тата ялсенчи потребительсен обществин правленийĕн председателĕсем пулса ĕçлекен 101 çынтан хĕрарăмсем 4 çын кăна. Райпотребсоюз правленийĕн председателĕ пулса пĕртен-пĕр хĕрарăм ĕçлет. Суту-илӳ организацийĕсенче ертсе пырас ĕçе хĕрарăмсене ытларах хутшăнтарма тăрăшас пулать.

Суту-илӳ ĕçĕнче пысăк ситменлĕхсем пурри нумай руководительсем «кадрсем ситменнипе» ăнлантарса пама пăхаççĕ. Çав хушăрах вĕсем практикăлла ĕçре ӳссе пыракан çамрăк кадрсене асăрхамаççĕ, вĕсене ӳсме кирлĕ пек пулăшса пымаççĕ. Суту-илӳ организацийĕсенчи руководительсен çак ситменлĕхе пĕтерсе пымалла, пысăк опыт пухнă работниксене упраса усранипе пĕрлех çамрăк кадрсене вĕрентсе ӳстерсе пыма куллен тăрăшас пулать.

Суту-илӳ предприятийĕсенче кадрсем тăтăшах улшăнаççĕ. Çакă вăл питĕ пысăк ситменлĕх пулса тăрать. Иртнĕ çулта Сĕнтĕрвăрри вăрманпромхозĕн ОРС-не кĕрекен суту-илӳ предприятийĕсенче ĕçлекенсенчен 70 проценчĕ улшăннă, республикăри Суту-илӳ министерствине кĕрекен организацисемпе предприятисенчи кадрсен 25 проценчĕ, Чăвашпотребсоюзăн суту-илӳ предприятийĕсенче номенклатурăна кĕрекен мĕнпур работниксенчен 30 проценчĕ улшăннă. Чăвашторгăн Атăл леш енчи уйрăмĕнче юлашки икĕ çул хушшинче 5 управляющи, мĕнпур работниксенчен 64 проценчĕ улшăннă.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ кадрсене тĕрĕс суйласа илсе ĕçе вырнаçтарассине тата вĕсене воспитани парассине яланах пысăк ĕç вырăнне хурса хаклать. Парти хушнă вирек мĕнле ĕçре те кадрсене вĕсен политикăлла тата ĕçлĕ пахалăхне кура тĕрĕс суйласа илесси çинчен парти кăтартса панисене çирĕп пурнăçа кĕртсе пырасси парти членĕн тивĕçĕ пулса тăрать. «Çав кăтартусене пăсни, работниксене туслă пулнипе, пĕр-пĕрне килĕштернипе, пĕр вырăнти çынсем тата тăван-хурăнташсем пулнипе ĕçе илекенсем партире пулма тивĕçлĕ мар», тенĕ парти Уставĕнче. КПСС Уставĕн требованийĕсене пурнăçа кĕртсе пырасси, кадрсене тĕрĕс суйласа илсе воспитани парасси — парторганизацисемпе кашни коммунистăн тавĕçĕ пулса тăрать.

Суту-илӳ ĕçĕнчи ситменлĕхсемпе йăнăшсем чылай чухне работниксен политикăлла пĕлĕвĕпе культурăлла шайĕ ситĕлĕксĕр пулнинчен, вĕсем общество умĕнчи хăйсен тивĕçне тĕрĕс ăнланса ситайменнинчен тата ответлăх туйăмĕ çи-

МТС[illegible]не малалла лайӑхлатассишӗн

Чурачӑкри машина-трактор станцине 1951 ҫулхи ҫурхине ҫеҫ организацилене. Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви социализмла ялхуҫалӑха кучухнехи хӑватлӑ техникӑпа хӗҫпӑшаллантарма тӑрӑшнине пирӗн МТС-ӑн материаллӑ-техникӑллӑ бази ӳснипе те лайӑх куратпӑр.

МТС паркӗнче хальхи вӑхӑтра тракторсем, самоходнӑй комбайнсем чылай. Культиваторсемпе сеялкӑсем те ҫителӗклӗ таран пур. Юлашки ҫулсенче тырӑ сортламалли, силос турамалли, ҫӗрулми лартмалли, кӑлармалли тата ытти машинӑсемпе оборудовани чылай туянтӑмӑр.

КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗн постановленийӗпе килӗштерсе, партипе правительство МТС-сен ӗҫне малалла лайӑхлатма пысӑк мерӑсем йышӑнчӗҫ. СССР Министрӗсен Совечӗпе партин Центральнӑй Комитечӗ йышӑннӑ постановлени, пур ҫӗрти пекех, пирӗн районти колхозниксемпе механизаторсем те пысӑк савӑнӑҫпа кӗтсе илчӗҫ. Вуншар агрономсемпе зоотехниксем, хӑйсене колхозсене яма ыйтса, заявленисем пачӗҫ. Ялхуҫалӑх механизацийӗн Канашри училищине вӗренме 52 ҫамрӑк кайрӗҫ. Савӑн чухлӗ ҫын пӗр харӑс вӗренме кайни пирӗн МТС-ра халиччен пулманччӗ-ха.

Колхозсенче ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ирттерессинче МТС татса паракан тӗп вӑй пулса тӑчӗ. Районта ялхуҫалӑх ӗҫӗсене механизациленин мӗн чухлӗ ӳснине ҫак цифрсенче те лайӑх куратпӑр: колхозсенче кӑҫал сураки ӗҫӗсене МТС вӑйӗпе 96.7 процент туса панӑ, тӗштырӑсенчен 36,1 процентне комбайнсемпе пухса кӗртнӗ, кӗрхи тырӑсенчен 92,2 процентне тракторсемпе акнӑ, ирхи тата кӗрхи сӗртме сухи тӑвассине 100 проценчӗпех механизациленӗ.

КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗн постановленийӗпе хавхаланса, МТС-ри механизаторсем хӑйсен аллине шанса панӑ техникӑпа тата лайӑхрах усӑ курма ҫӗнӗ обязательствӑсем йышӑнчӗҫ. Ҫӗнӗ хӑватпа савӑнӑҫлӑ социализмла ӑмӑртӑвӑн малти ретӗнче, яланхи пекех, коммунистсемпе комсомолецсем пыраҫҫӗ.

Парти райкомӗн членӗ К. Лаврентьев юлташ ертсе пыракан бригада хӑй ӗҫлекен колхозсенче кӗрхи сӗртме сухи тумалли плана октябрӗн 10-мӗшӗ тӗлне 120 процент И. Афанасьев, М. Анисимов коммунистсем, Ф. Осипов комсомолец ертсе пыракан бригадӑсем—103—106 процент тултарчӗҫ. Механизаторсем районти колхозсене 10 пин гектар ытла ҫӗр ҫинче кӗрхи сӗртме сухи туса пачӗҫ, халӗ планран ирттерсе ӗҫлеҫҫӗ. Савӑн пекех эпир колхозсене вӗсен уй-хирӗсенче нумай ҫул ӳсекен курӑксен вӑрлӑхне пӗтӗмпех комбайнсемпе вырса, ҫапса патӑмӑр.

МТС хӑйӗн ҫулталӑкри производство планне октябрӗн 10-мӗшӗ тӗлне тултарчӗ. Халӗ бригадӑсем планран ирттерсе ӗҫ тӑваҫҫӗ.

Пирӗн ӗҫре пирвайхи ӳсӗм пур, анчах ӑна ҫителӗклӗ теме халӗ иккепле те май ҫук. Партин Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ МТС-сен ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пурри ҫинчен кӑтартса пани пирӗн коллектива та тӳрремӗнех килсе тивет.

Пирӗн МТС колхоз производствин пур отраслӗсене те механизацилес ӗҫе ҫителӗксӗр хутшӑнать-ха. Сӑмахран, ҫӗрулми лартса тӑвас ӗҫе, районӗпе илсен, 12 процент ҫеҫ механизациленӗ. Обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх шучӗпе тухӑҫлӑхне ӳстерес енӗпе район республикӑра юлса пырать. 1952 ҫулта сӑвакан кашни ӗне пуҫне, районӗпе вӑтам шутпа, 600 литр ҫеҫ сӗт илнӗ. Ытти выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхӗ те питӗ сахал. Тӗп сӑлтавсенчен пӗри вӑл—выльӑхсем валли сӗтеклӗ апатсем ҫитменни тата фермӑсенчи йывӑр ӗҫсене сахал механизациленни.

Выльӑх-чӗрлӗх фермисенчи йывӑр ӗҫсене механизацилес тӗлӗшпе МТС колхозсене пысӑк пулӑшу пама тытӑнчӗ. Киров ячӗпе, Калинин ячӗпе тӑракан, «Совет», «Прогресс» тата «Союз» колхозсенче «ЗК-05» маркӑллӑ пысӑк кормозапарниксем вырнаҫтарса патӑмӑр. Ҫак колхозсем апата выльӑхсене пама хатӗрлес ӗҫсене ҫитес ҫывӑх вӑхӑтра пӗтӗмпех механизацилесе ҫитерессӗ. Кунсӑр пуҫне механизаторсем 5 колхозра вырӑнти предприятисенче туса хатӗрленӗ запарниксене вырнаҫтарса ӗҫе яма пулӑшрӗҫ.

Чурачӑк районӗнчи условисенче фермӑсене шыв кӗртес ӗҫе механизациленин уйрӑмах пысӑк вырӑн йышӑнать. Нумай колхозсенче выльӑх-чӗрлӗхе шӑвармалли, апат хатӗрлемелли шыва инҫетрен е тарӑн ҫырмасенчен йӑтса тертленеҫҫӗ. Ҫак ӗҫе механизацилесси—пирӗн ҫывӑх вӑхӑтра пурнӑҫа кӗртмелли задача пулса тӑрать.

Ялхуҫалӑхне малалла аталантарас тӗлӗшпе партипе правительство пирӗн умма лартнӑ пысӑк задачӑсене тӳррӗн пурнӑҫлассин халӗ ӗнтӗ чи малтан хамӑртан, МТС-па колхозсем пӗр-пӗрине тунӑ договорсене тӗрӗссӗн пурнӑҫланинчен килет.

Йышӑнас пулать, ҫӗрӗҫ культурине хӑпартас, уй-хир ӗҫӗсене лайӑх срокра тата пысӑк пахалӑхпа ирттерес тӗлӗшпе трактор бригадисенчен ытларах ыйтмалла. Анчах колхозсем хӑйсен обязательствине пурнӑҫламасан, механизаторсем тӑрӑшни те вырӑнсӑр пулать. Агротехникӑлла мероприятисене пурнӑҫлама тӑрӑшман колхозсем пирӗн районта та пур-ха. Малта пыракан ӗҫ меслечӗпе усӑ курассине хакламанни колхоза тата государствӑна мӗн чухлӗ сиен кӳнине курма икӗ артель 1952 ҫулта мӗнле ӗҫленине танлаштарса пӑхӑпӑр. Вӗсем агротехника мероприятийӗсен планне мӗн чухлӗ тултарнине процентпа кӑтартнӑ:

Колхозсен ячӗсем	Уй-хире тислӗк кӑларнӑ	Вӑрлӑхсене имҫамсемпе чӳхесе акнӑ	Кӗртырри калчисене сӳреленӗ	Хӗреслӗ майпа акнӑ	Кашни гектар пуҫне вӑтам шутпа тырӑ пухса кӗртнӗ (центнерпа)
«Прогресс»	104,5	100	26	120	10,06
«Динамо»	54,2	26	—	230	6,20

Хӑшпӗр колхоз руководителӗсем ҫӗрулми вӑрлӑхне, гектар пуҫне 20—30 центнер вырӑнне, 10—12 центнер ҫеҫ лартса, унӑн тухӑҫне нумай чакараҫҫӗ. «Гигант» колхоз председателӗ Н. Смирнов юлташ ҫӗрулми лартса тӑвас ӗҫе механизацилеме килӗшмест.

МТС туса панӑ ӗҫсемшӗн натуроплата тӳлес йӗркере грушӑсене пӗтерни халиччен тӗрӗс мар льготӑсем илсе тӑнӑ колхозсене хытах пырса тивет, вӗсене агротехника требованийӗсене тӳррӗн пурнӑҫлама хушать.

МТС-ӑн материаллӑ-техникӑллӑ бази малашне темиҫе хут ӳсни, механизаторсен кадрӗсене ҫирӗплетни, колхозсене квалификациллӗ специалистсем яни пире ҫӗрӗҫ тата выльӑх-чӗрлӗх пӑхас ӗҫ культурисене нихҫанхинчен ҫӳле хӑпартма май парать. Анчах пирӗн ӗҫе лайӑхлатса пама пӳлсе тӑракан чӑрмавсем те пур-ха, вӗсем ҫинчен каламасӑр хӑварма ҫук.

Чурачӑк районӗнче вак колхозсене пӗрлештерес ӗҫе халӗ те вӗҫлесе ҫитермен. Районта пурӗ 40 колхоз вӗсенчен иккӗшӗн—«Прогресс» тата «Динамо» колхозсен ҫеҫ акмалли ҫӗр лаптӑкӗ пиншер гектартан иртет. 500 гектар таранччен ҫӗр акса пурӑнакан колхозсем речӗпех, темелле. «Дружба» колхозӑн уй-хирти пусӑ саврӑнӑшӗнчи акмалли ҫӗрӗ—166, «1-ое Мая» колхозӑн—143, «Красный самолет» колхозӑн—157 гектар ҫеҫ шутланать. Ҫавӑн пек колхозсенче МТС-ӑн тракторӗсемпе тата ытти кӑткӑс машинисемпе туллин усӑ курасси ҫинчен калаҫма та ҫук. Сураки ирттернӗ тапхӑрта трактористсем пӗр тӑвӑр участокран теприн ҫине куҫса, е пӗр культура хыҫҫӑн тепӗрне акма хатӗрленсе нумай вӑхӑт ирттереҫҫӗ. Колхозсем, уй-хир бригадисем пӗчӗк пулни колхозсенче производительнӑй вӑйсене аталантарма чарса тӑракан пысӑк чӑрмав пулса тӑчӗ.

Колхозсене авӑн ҫапса памалли плана эпир, пӗтӗмӗшпе илсен, тултартӑмӑр. Планран ирттерсе ӗҫлесчӗ, колхозсене ку ӗҫре ытларах пулӑшасчӗ, анчах пӗчӗк колхозсем пулни кансӗрлех чарса тӑрать. Ворошилов ячӗпе, Киров ячӗпе тӑракан колхозсенче ӗҫ вӑйӗ сахал пирки молотилкӑсемпе талӑкра икӗ смена хушши ӗҫлеме пултараймаҫҫӗ.

Ҫак [illegible]хозсене пӗрлештерес, уй-хир бригадисене пысӑклатас ӗҫе вӗҫне ҫитермесен МТС техникипе малашне те тӗрӗс усӑ кураймӑпӑр.

КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ МТС-сенче кадрсем суйласа илес, вӗсене ӗҫе вырнаҫтарас тата воспитани парас ӗҫре пысӑк ҫитменлӗхсем пулнине палӑртрӗ. Ҫав ҫитменлӗхсем пирӗн МТС-ра та пур. Уйрӑмах инженерсемпе техниксем ҫитменни пире ӗҫре хытах сисӗнтерет.

МТС-ра кадрсен ӗҫлӗ квалификацине ӳстерес, вӗсене темиҫе профессие вӗрентес тӗлӗшпе мерӑсем йышӑнман-ха. Пирӗн механизаторсенчен нумайӑшӗ пӗрер профессине кӑна пӗлеҫҫӗ, колхоз производствин нумай енлӗ отраслӗсене механизацилес ӗҫсем анлӑн пуҫлансан, ҫав ҫитменлӗхсем пире хытах чӑрмав кӳме пултараҫҫӗ.

Партин Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗ социализмла ялхуҫалӑха малалла хӑватлӑн аталантарасси, унӑн техникӑллӑ-материаллӑ базине тӗреклетесси парти, совет, хуҫалӑх организацийӗсен чи кирлӗ задачи пулнине кӑтартса пачӗ.

Эпир хамӑр МТС-ӑн хуҫалӑхне аталантарма республикӑри организацисенчен пысӑк пулӑшу кӗтетпӗр. Халӗ МТС-ра кирпӗчрен типовӑй мастерской ҫурчӗ тӑватпӑр, ку вӑл кучухнехи техникӑпа механизациленӗ пысӑк предприяти пулать. Анчах пире пулӑшма тивӗҫлӗ хӑшпӗр организацисемпе предприятисем пирӗн ыйтусене вӑхӑтра тивӗҫтерме тӑрӑшмаҫҫӗ.

Чӑваш АССР Ялхуҫалӑхӗпе хатӗрлев министерстви пире ҫителӗксӗр пулӑшни ҫинчен хытах калама тивет. Вӑл мастерской ҫуртне тума кирлӗ сметӑсемпе проектсене вӑхӑтра хатӗрлесе памарӗ. Унтан цемент ҫителӗклӗ уйӑрса памасӑр строительствӑна чӑрмантарса тӑчӗ. Ҫурт тӑррине витмелли шиферпа листа-тимӗре кирлӗ таран тупса пама васкамасть.

Канашри кирпӗч завочӗ (директорӗ Разумов юлташ) пирӗн строительство валли тивӗҫлӗ кирпӗче вӑхӑтра памасӑр чарса тӑрать.

Шупашкарти вӑрман промысла артелӗ (председателӗ Смелов юлташ) мастерской ҫурчӗ валли кантӑк рамисем, алӑксемпе янахӗсене туса пама килӗшнӗ договора пурнӑҫламасть.

Эпир ҫав предприяти руководителӗсенчен пирӗн заказсене хӑвӑртрах пурнӑҫлама ыйтатпӑр.

Нихҫанхинчен пысӑк хавхаланупа ӗҫлет пирӗн коллектив хальхи кунсенче. Социализмла ялхуҫалӑха малалла чечеклентерессишӗн пыракан кӗрешӳре вӑл хӑйӗн вӑйне хӗрхенсе тӑмӗ.

А. КОНДРАТЬЕВ,
МТС директорӗ.

К. СМИРНОВ,
партбюро секретарӗ.

Тутар республикинчи нефтяниксем патӗнче

Республикӑри нефтяниксем, СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗн решенийӗсемпе тата КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗн постановленийӗпе хавхаланса, производствӑри хастарлӑха ӳстерсех пыраҫҫӗ. Ҫак кунсенче Тутар республикинчи нефть предприятийӗсенче—буровойсенче, скважинӑсенче, нумай йышлӑ стройкӑсенче ӗҫлекенсен пухӑвӗсем пулса иртеҫҫӗ. Нефть предприятийӗсен коллективӗсем, партипе правительство халӑх ырлӑхӗшӗн тӑрӑшнишӗн хавхаланса, пысӑкрах обязательствӑсем илеҫҫӗ, ҫулталӑкри производство планне, пиллӗкмӗш пилӗкҫуллӑх заданийӗсене срокчен тултарма сӑмах параҫҫӗ. Кашни предприяти коллективӗ хӑйӗн социализмла обязательствисене чыслӑн пурнӑҫлама тӑрӑшать. «Бавлынефть» тресчӗ икӗ ҫулталӑка яхӑн ӗнтӗ нефтяниксен Пӗтӗм Союзри социализмла ӑмӑртӑвӗнче малта пырать. Бавлӑри нефтяниксем СССР Министрӗсен Совечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне ултӑ хутчен илчӗҫ. Вӗсем, СССР Нефть промышленноҫӗн министерствипе ВЦСПС-ӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне те хӑйсен аллинче ҫирӗппӗн тытса тӑраҫҫӗ.

Бавлӑри буровиксем куллен-кун ҫӗнӗ ӳсӗмсем тӑваҫҫӗ. Гайфуллин, Гимазов, Донской, Каюмов, Гиниятуллин, Бризицкий мастерсен бригадисем иртнӗ 8 уйӑх хушшинче кашниех 6.500—8.500 метр тарӑнӑш скважинӑсем пӑраланӑ. Бу вӑл ҫулталӑкри задание 150—200 процент тултарни пулать.

Буровиксем 1953 ҫулхи производство планне срокчен—ноябрӗн 7-мӗшӗ тӗлне тултарма, ҫулталӑк вӗҫлениччен нефть скважинисем пӑралама уйӑрнӑ укҫана 5 миллион тенкӗрен кая мар перекетлеме, планран ирттерсе 11 пин метр тарӑнӑш проходка тума, хӑвӑрт пӑраласа пӗтернӗ кашни скважинӑна вӑтамран пӗр уйӑх малтан ӗҫе яма пулчӗҫ.

Буровой бригадӑсен коллективӗсем ҫак обязательствӑсене чыслӑн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ.

Бавлӑри нефтяниксен тӗслӗхӗпе хавхаланса Тутарстанри ытти мӗнпур буровиксемпе промысловиксем хушшинче те социализмла ӑмӑрту анлӑн саралса пырать.

— Нефть кӑлармалли ҫулталӑкри плана срокчен тултарар, халӑх хуҫалӑхне планран ирттерсе 165 пин тонна нефть парар!—ҫакӑн пек лозунг курма пулать халӗ Татнефть пӗрлешӗвӗн пур промыслисенче те.

Элметри, Шӗкӗрти, Ново-Письмянкӑри нефть промыслисен коллективӗсем пултаруллӑ ӗҫлеҫҫӗ. Скважинӑсенче операторсен ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме май паракан ҫӗнӗ оборудовани нумайланчӗ.

«Альметьевобурнефть», «Татбурнефть» тата «Татнефтегазразведка» тресчӗсен бурени кантурӗсемпе буровой бригадисем нефть скважинисем пӑралламалли ҫулталӑк планне декабрӗн 25-мӗшӗ тӗлне тултарма обязательство илнӗччӗ. Халӗ буровой трестсен коллективӗсем ку срока чылай кӗскетеҫҫӗ—ҫулталӑк планне декабрӗн 5-мӗшӗ тӗлне тултарма ҫирӗп сӑмах параҫҫӗ.

Ҫак кунсенче нефтяник-строительсем хушшинче те ӗҫри ҫӗкленӳ питӗ пысӑк. Строительсен нумай ҫӗршер бригадисем нефть тухакан районсенче рабочисем валли илемлӗ поселоксем тӑваҫҫӗ, унти ҫуртсене электричество, газ, водопровод кӗртеҫҫӗ. Бавлӑра, Элметре, Азнакайра, Ново-Письмянкӑра, Шӗкӗрте нефтяниксем валли пурӑнмалли ҫуртсем тата культурӑпа йӑла учрежденийӗсем чылай тӑваҫҫӗ.

Партипе правительство пирӗншӗн, совет ҫыннисемшӗн, ывӑнма пӗлмесӗр тӑрӑшаҫҫӗ. Тӑван ҫӗршыв ырлӑхӗшӗн пӗтӗм вӑя хурса, мӗнпур пултарулӑха парса ӗҫлесси—пирӗн таса тивӗҫ, теҫҫӗ нефтяниксем.

А. ФЕДОРОВ.

„КУ КĔНЕКЕ МĔН ТУМА КИРЛĔ-ШИ?“

(Жалоба кӗнекисем тӑрӑх)

«Магазин заведующине.

Акӑ ӗнтӗ сентябрӗн 16-мӗшӗнчен вара пурӑ шыратӑп. Пурри Чебторгӑн базинче выртать пулин те эсир ӑна темшӗн кӳрсе килесшӗн мар. Ответлеме ыйтатӑп: ҫултлӑх пурӑ пулать-и е ҫук-и? Тавар илекенсен ыйтӑвӗсене тивӗҫтерес енӗпе мӗншӗн нимӗн те тумастӑр? Хама мӗн кирли ҫинчен ҫак кӗнеке ҫине сентябрӗн 19-мӗшӗнчех ҫырса хӑвартӑм. Ӑнланаймастӑп: ку кӗнеке мӗн тума кирлӗ-ши?

Ҫакна нумаях пулмасть Чебторгӑн хуҫалӑх таварӗсем сутакан 6-мӗш номерлӗ магазинӗн жалоба кӗнеки ҫине ҫырса хӑварнӑ. Ҫав йӗркесене ҫыраканӗ хӑйӗн шухӑшне ахальтен мар ҫав сӑмахсемпе вӗҫленӗ.

Кӑҫалхи августӑн 22-мӗшӗнчен пуҫласа октябрӗн 17-мӗшне ҫитиччен магазинти жалоба кӗнеки ҫине 25 жалобӑпа сӗнӳ ҫырса хӑварнӑ. Вӗсене ҫыраканӗсем пурте хӑйсене кирлӗ таварсем кӳрсе килме ыйтаҫҫӗ, сӗнеҫҫӗ, тивӗҫтерменшӗн пӑшӑрханаҫҫӗ.

Акӑ А. Яковлева кӗпе-йӗм ҫумалли валашка кӳрсе килме ыйтса виҫӗ хутчен—июнӗн 20-мӗшӗнче, июлӗн 8-мӗшӗнче, юлашкинчен сентябрӗн 22-мӗшӗнче—ҫырать. Хӑйӗн телефон номерне те кӑтартать. Анчах вӑл магазинтан хӑйне кирлӗ тавара та, ответ та халиччен кӗтсе илеймест. Ытти сӗнӳсемпе жалобӑсем пирки те ӗҫ ҫавнашкалах тӑрать: таварне те кӳрсе килмеҫҫӗ, ответне те памаҫҫӗ.

Ҫак хаклӑ сӗнӳсене шута илсе, магазинӑн кирлӗ таварсем кӳрсе килме тӑрӑшмалла. Ҫырса хӑварнӑ ҫынсене ҫырупа е телефонпа тавар илме килме чӗнмелле е заявка пани ҫинчен пӗлтермелле. Анчах кунта ун ҫинчен шутлама мар, ку ӗҫе ытлашши ӗҫ, чӑрмав, тесе шутлать магазин заведующийӗ Майоров юлташ.

* * *

«Бардасов юлташ! Жалоба кӗнекине официанткӑран 3—4 хутчен ыйтма тивет, ҫапах та илейместӗн» тесе ҫырать Муркашри чайнӑйри жалоба кӗнеки ҫине Музыков юлташ, (Бардасов юлташ вӑл—кунти райпотребсоюз правлени председателӗ. Сӑмах майӗн каласах хӑвармалла: кунта апатланакансем чайнӑй заведующине Егоров юлташа ӗненме пӑрахнӑ. Ҫавӑнпа тӳрех асли патне—райпотребсоюз правлени председателӗ патне ҫыраҫҫӗ).

Йывӑр кунта жалоба кӗнеки патне ҫитме. Ӑна чӑнах та пули-пулми ҫынна тыттармаҫҫӗ иккен. Ҫавах та январӗн юлашки кунӗсенчен пуҫласа тӑхӑр уйӑха яхӑн тапхӑрта апатланакансем 15 жалобӑпа сӗнӳ ҫырма ӗлкӗрнӗ-ӗлкӗрнех. Чӑрмавсем мар пулсан, ҫав жалобӑсен шучӗ тепӗр ун чухлӗ те ытла пулатчӗ пулӗ.

«Манӑн жалоба чайнӑй заведующийӗ патне ҫитессе шанмастӑп, мӗншӗн тесен малтанхи жалобӑсем тӑрӑх нимӗн те туман: кам тытса вулать вӗсене, вӗсем тӑрӑх мӗн тунӑ? Мӗнле пулсан та, район центрӗнчи ҫак пӗртен-пӗр столовӑй пеккинчен ӗҫсыннисене культурӑлла апатлантаракан предприяти туса хума кирлех пулӗ тесе шутлатӑп» тесе ҫырать чайнӑя ҫула майӑн кӗнӗ пӗр офицер.

Чайнӑйри йӗркесӗрлӗхсемпе ҫитменлӗхсем ҫинчен жалоба кӗнеки ҫине ҫырнинчен усси ҫуккине кунта яхӑн апатланакансем пӗлсе ҫитнӗ ӗнтӗ. Заведующипе каласса пӑхма шутларӗҫ пирӗн умрах пӗрисем. Буфетчица Яковлева пӗлтернӗ тӑрӑх, пуҫлӑх анчах кухньӑраччӗ. Пӗр-икӗ минутранах официантка «заведующи хулана тухса кайнӑ» терӗ. Нимӗн те тума ҫук: йӗп пулчӗ хайхи пуҫлӑх, сутӑ кунтах курсан сухалчӗ.

Клиентсем ҫине буфетчица кӑшкӑрать, заведующи вӗсенчен тарса ҫӳрет. Соломкин повар апатланакансен пӑшӑрханӑвӗ ҫине алӑ сулать те, хӑвӑртрах кухньӑна кӗрсе пытанать. Чайнӑйра ҫавах тасамарлӑх, вӑрӑм черет, ыйӑх пахалӑхлӑ ҫимӗҫсем... Сӗтрен, пахча ҫимӗҫрен, кӑмпаран, улма-ҫырларан хатӗрленӗ апат ҫиессине кунта ан та ӗмӗтлен.

Кӗнекери кашни жалоба тенӗ пекех «Бардасов юлташ!», «Бардасов юлташ!» тесе пуҫланать. Пӗр уйӑх иртет, иккӗ, ҫур ҫул, ытларах та—ответ та ҫук, чайнӑй ӗҫӗнче нимӗнле улшӑну та курӑнмасть. «Броньӑпа витӗннӗ тейӗн ку председатель, ӑна темӗнле тупӑран персен те витмест тейӗн» калаҫҫӗ Муркашра. Пурпӗрех илтмест Бардасов, шарламасть!

* * *

Шупашкар хулинчи индпошивӑн 1-мӗш номерлӗ мастерскойӗнче жалоба кӗнеки куҫ умӗнчех ҫакӑнса тӑрать. Унта ҫырма чару ҫук. Апла пулин те кӑҫал унта 4 жалоба кӑна ҫырса хунӑ. Жалобӑсен шучӗ сахаллине кура мастерской заказчиксен ыйтӑвӗсене туллин тивӗҫтерсе пырать, темелле. Пачах урӑхла, жалобӑсем сахалли мастерской заведующийӗ Стайнова юлташ вӗсем ҫине пӳрне витӗр пӑхнине пӗлтерет. Заказсене вӑхӑтра туса паманшӑн, вӗсене ыйтнӑ пек ҫӗлеменшӗн, хӑшпӗр работниксем кӑмӑллӑ йышӑнманшӑн заказчиксем темиҫе уйӑх каялла та пӑшӑрханнӑ, халӗ те вӑл ҫаплах пырать.

Акӑ, сӑмахран, Маркова заказчица июльте пальто ҫӗлеме панӑ. Вӑл ҫанӑсене вӑрӑм туса пама ыйтнӑ, анчах Ракеева закройщица ӑна кӗске ҫанӑллӑ, пачах урӑх фасонлӑ пальто туса панӑ.

Сидоркин заказчик та ҫав уйӑхрах Степанов закройщик ҫынсемпе калаҫма пӗлменни, ним сӑлтавсӑр заказ йышӑнманни ҫинчен жалоба ҫырать. Ҫав икӗ жалоба айне «производствӑлла канашлура сӳтсе явнӑ» тесе ҫырнӑ заведующи. Кун хыҫҫӑн ӗҫ юсанмалла темелле ӗнтӗ. Анчах ку ҫук-ха. Акӑ август уйӑхӗнче Виноградов заказчик ӗҫе вӑхӑтра туса паманни ҫинчен ҫырать. «Заказчика ӗҫне мар, сӗвӗсӗн заказне тӑваҫҫӗ кунта» тесе ҫырать октябрӗн 9-мӗшӗнче В. Купцова заказчица, мӗншӗн тесен Горянкина сӗвӗспе Аршинова закройщица ӑна нимӗн виҫсе пӑхмасӑр хӗллехи пальто ҫӗлесе панӑ.

Юлашки икӗ жалоба тӑрӑх паянччен нимӗнле мера та йышӑнман.

* * *

Республикӑри больница пуҫлӑхӗсем жалобӑсенчен вутран хӑранӑ пек хӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа та кӗнекине ҫынсем иртсе ҫӳренӗ вырӑнта—дежурнӑй патӗнче мар, коридор вӗҫӗнчи хыҫалти пӳлӗмре секретарь патӗнче тытса усраҫҫӗ. Эпӗ унтан жалоба кӗнеки ыйтсан, секретарь сайран чи малтан эсӗ камне, ӑҫтан аннине тата мӗн ҫинчен ҫырма шутланине тӗпчесе пӗлет. «Тен, ӑна жалоба кӗнеки ҫине ҫырмасӑрах татса пама май пур», тет вӑл сана. Капла, паллах, пынӑ ҫынсем больницӑри ҫитменлӗхсем ҫинчен жалоба кӗнеки ҫине ҫыраймаҫҫӗ, кӗнекине шыраса ҫӳреме те, ыйтма та хӑяймаҫҫӗ. Кӑҫалхи тӑхӑр уйӑх хушшинче кӗнеке ҫине мӗншӗн 7 жалоба кӑна ҫырӑннине кунтан сӑмахсӑрах ӑнланмалла.

«Поликлиникӑра жалоба кӗнекине алла илме ҫӑмӑлах мар ӗнтӗ» тесе ҫырать пӗр районтан килнӗскер. «Жалоба кӗнеки ыйтма пыня манӑн икӗ хутчен килме тиврӗ», тесе ҫырать А. Иванов.

Ҫырнӑ жалобӑсем ахаль те сахал-ха. Главврач заместителӗ И. Валк юлташ вӗсене те пулия тӗрӗс мар тесе шутласшӑн, больницӑри работниксен ҫитменлӗхӗсене пур майпа та витсе хӑварасшӑн. Ҫавӑн ҫинчен жалобӑсем айне вӑл ҫырнӑ ответсем уҫӑмлӑ калаҫҫӗ. Акӑ пӗр тӗслӗх.

Хӑлха чирӗнчен сывалма районтан килнӗ В. Еремеева эмел илме рецепт ҫырса параҫҫӗ. Вӑл аптекӑна каять, анчах унта пичет пусман рецепта йышӑнмаҫҫӗ. Вӑл каллех больницӑна таврӑнать, ӑна Мочалова сестра: «Сана пичет пусмарма кайма каланӑ вӗт, хӑлхасӑр-и мӗн эсӗ!»—тесе кӳрентерет. Чирлӗ ҫын кӑмӑлсӑр пулать те, хӑйне пичетсӗр рецептпа аптекӑна ахалех ӳттарни, сестра кӳрентерни ҫинчен жалоба кӗнеки ҫине ҫырать. Жалобӑна тӗплӗн пӑхса тухас вырӑнне, главврач заместителӗ ҫӑмӑллӑнах ҫапла ответлет: «Чирлӗ ҫын нитсе юлайман пулмалла, мӗншӗн тесен вӑл сестра еннелле сылтӑм хӑлхипе ҫарлӑ. Мочалова сестра ӑна пӗртте кӳрентермен (Колегов врач тата Мочалова медсестра ҫырса ӑнлантарса пани)». Мӗн тӑвӑн: апла алӑ ҫӑвать, тесӗ ваттисем. Кунта ҫаплах пулнӑ ӗнтӗ вӑл.

* * *

Жалоба кӗнекин пӗлтерӗшӗ пысӑк: вӑл ӗҫсыннисен аялтан килекен критикине палӑртса тӑрать. Вӑл пирӗн учрежденисемпе организацисен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсемпе йӗркесӗрлӗхсене кӑтартса парать, ертсе пыракансене ҫав ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе куллен тата ҫиле тӑрса ӗҫлеме хушать.

Ертсе пыракансен хӑйсен кӑна мар, хӑйсене шанса панӑ учрежденисемпе организацисенче ӗҫлекенсене те ӗҫсыннисен жалобисемпе сӗнӗвӗсене хисеплеме вӗрентес пулать.

Анчах ҫӳлте асӑннӑ организацисенче халлӗхе ку ҫук-ха. Республикӑри больницӑра, Муркашри чайнӑйра жалоба кӗнекисене ӗҫсыннисенчен пытарса усрани, Чебторгӑн 6-мӗш номерлӗ магазинӗнче жалобӑсемпе сӗнӳсем ҫине ҫаврӑнса та пӑхманни, Шупашкарти индпошивӑн 1-мӗш мастерскойӗнче жалобӑсем ҫине, кусран ҫухалтӑр тенӗ пек, ячӗшӗн ҫеҫ ответлени,—ҫаксем пурте унти руководительсем аялтан килекен критикӑна хӗснине пӗлтереҫҫӗ.

Пӗр жалоба та, пӗр сӗнӳ те ответсӑр юлмалла мар. Ӗҫсыннисем мӗн ыйтнине тивӗҫтерме мӗнпур вӑя хумалла. Ҫавӑн чухне ҫеҫ жалоба кӗнекисенче «Ку кӗнеке мӗн тума кирлӗ-ши?» текен ыйтусем пулмӗҫ.

Ст. ИВАНОВ.

телӗксӗр пулнинчен килеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та кадрсене тӗрӗс суйласа илес ӗҫе лайӑхлатса пынипе пӗрлех вӗсен марксистла-ленинла пӗлӗвне, ӗҫлӗ квалификацине ӳстерессишӗн ырми-канми тӑрӑшмалла.

Анчах та парти райкомӗсемпе хула комитечӗсем, суту-илӳ ӗҫӗнчи ертсе пыракан работниксем, ҫавӑн пекех пуҫламӑш парторганизацисем суту-илӳ работникӗсене политикӑлла воспитани парас тата вӗсен квалификацине ӳстерес ӗҫ ҫине ҫителӗксӗр ҫаврӑнса пӑхаҫҫӗ. Иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнче суту-илӳ работникӗсенчен нумайӑшне политикӑлла вӗренӗве хутшӑнтарман. Сӑмахран, Вӑрнар районӗнче потребкоопераципе вӑрманпромхоз ОРС-ӗнче ӗҫлекен 292 работникрен 31 ҫынна кӑна политикӑлла вӗренӗве хутшӑнтарнӑ. Ҫӗмӗрле вӑрманпромхозӗнчи 110 работникрен 16 ҫын кӑна марксизм-ленинизм теорине вӗреннӗ. Суту-илӳ работникӗсене политикӑлла воспитани парас ӗҫе кӑҫал та ҫителӗксӗр йӗркеленӗ.

Суту-илӳ работникӗсем валли обществӑлла-политикӑлла темӑсем тӑрӑх лекцисемпе докладсем ытла та сахал, вӑхӑтран вӑхӑта кӑна вулаҫа параҫҫӗ. Политикӑлла воспитани ӗҫне чылай чухне тӗллевсӗр, производство ыйтӑвӗсемпе ҫыхӑнтармасӑр, илес тӗлӗшӗнчен ҫителӗксӗр пусӑмра ирттереҫҫӗ.

Воспитани ӗҫне ҫителӗксӗр туса пынине пула та ӗнтӗ юлхавлӑх пуҫланать, уйрӑм работниксем хӑйсен ӗҫӗ ҫине сӳрӗккӗн, ответсӑррӑн пӑхакан пулаҫҫӗ. Красноармейски районӗнчи чылай магазинсемпе лавкӑсенче куллен кирлӗ таварсем (тӑвар, краҫҫын, супӑнь т. ыт. те) курма ҫук. Сав кушӑрах вара ҫав таварсем склатсенче темӗн чухлех выртаҫҫӗ. Райпотребсоюзпа унсен руководителӗсем ҫак йӗркесӗрлӗхсене курса тӑраҫҫӗ, анчах та вӗсене пӗтерме мерӑсем йышӑнмаҫҫӗ. Ҫакӑн пек йӑнӑшсем патне илсе пырать те ӗнтӗ суту-илӳ работникӗсен хӑйсен политикӑлла пӗлӗвне ӳстерменни.

Суту-илӳ работникӗсен квалификацине ӳстерес ӗҫе те начар йӗркеленӗ. Чылай организацисемпе предприятисенче суту-илӳпе апат-ҫимӗҫ хатӗрлекен предприятисенчи работниксен техникӑлла вӗренӗвне йӗркелемен, кадрсене курссенче вӗретмелли плана тултарса пымаҫҫӗ. Хӑшпӗр работниксем хӑйсен ӗҫлӗ квалификацине ӳстерес тӗлӗшпе пачах ӗҫлемеҫҫӗ, суту-илӳ ӗҫне вӗренмеҫҫӗ. Республикӑри суту-илӳ министерствипе Чӑвашпотребсоюз работникӗсен квалификацине ӳстерме тӑрӑшмаҫҫӗ, ҫак кирлӗ ӗҫ ҫине тимсӗр пӑхаҫҫӗ.

Массӑсене воспитани парас ӗҫре производствӑлла канашлусем пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Производствӑлла канашлусенче работниксем пӗр-пӗрин опычӗпе паллашаҫҫӗ, ҫитменлӗхсене палӑртса вӗсене пӗтерсе пымалли, пысӑкрах ӳсӗмсем тумалли майсене кӑтартса параҫҫӗ. Анчах та нумай суту-илӳ предприятийӗсенче производствӑлла канашлусене кирлӗ пек хакламаҫҫӗ, работниксене сайра хутра кӑна пухаҫҫӗ, производствӑлла канашлусене тӗллевсӗр, ҫителӗксӗр пусӑмра ирттереҫҫӗ. Чӑвашторгӑн Канашри уйрӑмӗнче производствӑлла канашлусем ирттермеҫҫӗ теме ҫук. Анчах ун пек канашлусенче руководительсем работниксене харкашаҫҫӗ кӑна, тивӗҫлӗ воспитани памаҫҫӗ.

Критикӑпа самокритика кадрсене воспитани памалли тӗп меслет пулса тӑраҫҫӗ. Критикӑпа самокритикӑна анлӑн сарнӑ ҫӗрте кӑна кадрсене коммунизм строительствинче ӳсӗмсем тума тӗрӗс воспитани пама пулать. Анчах та суту-илӳ организацийӗсенче критикӑпа самокритика тивӗҫлӗ вырӑн йышӑнайман-ха. Хӑшпӗр работниксем хӑйсен йӑнӑшӗсемпе ҫитменлӗхӗсене пытарма, ӗҫӗн начар енӗсене витсе хума, ӗҫе ытлашши лайӑхлатса кӑтарама пӑхаҫҫӗ. Ун пек работниксем совет суту-илӗвӗн правилисене пӑснӑ тӗслӗхӗсемпе, уйрӑм работниксем дисциплинӑна пӑснипе килӗшсе пыраҫҫӗ, тавар илекенсем каланине итлемеҫҫӗ, аялтан килекен критикӑран тивӗҫлӗ вывод тумаҫҫӗ.

Суту-илӳ предприятийӗсен руководителӗсен тата парторганизацисен критикӑпа самокритикӑна куллен вӑйлатса пыма тӑрӑшмалла, кадрсене ҫитменлӗхсемпе килӗшмелле мар пулма воспитани парса пымалла.

Суту-илӳ работникӗсене воспитани парас ӗҫре социализмла ӑмӑрту пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Социализмла ӑмӑрту массӑсен активлӑхне ӳстерет, работниксене государство интересӗсене чи пысӑк вырӑна хурса ӗҫлеме вӗрентет, ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетме, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме пулӑшать. Социализмла ӑмӑртӑва лайӑх йӗркеленӗ суту-илӳ предприятийӗсен ӗҫӗнче яланах ӳсӗмсем пулаҫҫӗ. Сӑмахран, Чӑвашторгӑн Сӗмӗрлери уйрӑмӗн пӗрремӗш тата виҫҫӗмӗш магазинӗсем (директорӗсем — Грязнов тата Мокшанов юлташсем) кӑҫалхи иккӗмӗш кварталти ӑмӑртура чылай пысӑк ӳсӗмсем турӗҫ. ССР Союзӗн Суту-илӳ министерствипе ВЦСПС ҫак магазинсен коллективӗсем лайӑх ӗҫленине палӑртрӗҫ. Партипе профсоюз организацийӗсем ӑмӑртӑва тата ытларах вӑйлатса пырсан, паллах, пирӗн ӗҫри ӳсӗмсем ытларах пулмалла.

Суту-илӳ кадрӗсене воспитани парасси ҫинчен каланӑ май, государствӑна потребкоопераци суту-илӗвӗнчи работниксен профсоюзӗсен обкомӗсем ҫинчен асӑнмасӑр иртсе кайма май ҫуккӑнӑ. Обкомсен суту-илӳ работникӗсене воспитани парас, социализмла ӑмӑртӑва йӗркелес тӗлӗшпе вырӑнти профорганизацисене сахал пулӑшаҫҫӗ, вӗсен ӗҫӗсене тӗрӗслесе тӑмаҫҫӗ. Ҫавна пула вырӑнти профорганизацисен ытла та сӳрӗккӗн ӗҫлеҫҫӗ. Вӑрнар районӗнчи потребкооперацинчи профсоюз организацийӗ нимӗнле ӗҫ те тумасть, райпотребсоюзри профорганизацире кӑҫал пӗр пуху та ирттермен. Профсоюз организацийӗсем социализмла ӑмӑрту ыйтӑвӗсемпе интересленмеҫҫӗ. Ҫакӑн пек йӗркесӗрлӗхпе инепле те килӗшсе тӑма май ҫук. Профсоюз организацийӗсен суту-илӳ работникӗсен социализмла ӑмӑртӑвне тӑтӑшах вӑйлатса пымалла, малта пыракансен опытне сарса, мӗнпур работниксене лайӑх ӗҫлеме вӗрентсе пымалла.

Ӗҫсыннисен пурнӑҫӗ лайӑхланса тата культури ӳссе пынӑ май тавар илекенсем суту-илӳ работникӗсем умне пысӑкран та пысӑкрах требованисем лартаҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл суту-илӳ кадрӗсем хатӗрлес ӗҫе лайӑхлатма, ӗҫ культурине, суту-илӳ работникӗсен ответлӑхне ӳстерсе пыма хушать. Суту-илӳ работникӗсене тӗрӗс те тӳрӗ кӑмӑллӑ, государство дисциплинине лайӑх тытса пыма, совет суту-илӗвӗн правилисене пурнӑҫласа пыма воспитани парасси — партипе профсоюз организацийӗсен тата ертсе пыракан работниксен куллен тумалли ӗҫӗ. Воспитани ӗҫне совет суту-илӗвӗ умӗнче тӑракан паянхи аслӑ задачӑсене пӑхӑнтарса туса пымалла.

Партипе совет органӗсен тата суту-илӳ организацийӗсен руководителӗсен, СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗ тата КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ йышӑннӑ решенисене пурнӑҫлассишӗн кӗрешсе, суту-илӳ ӗҫне тӗпренех вӑйлатса пымалла, совет ҫыннисен куллен ӳссе пыракан ыйтӑвӗсене туллин тивӗҫтермелле. Суту-илӳ кадрӗсене ҫак хисеплӗ задачӑсене пурнӑҫлассишӗн ырми-канми тӑрӑшма воспитани парса пымалла.

Ф. ШАТРОВ,
КПСС Чӑваш обкомӗн администратитивӑй тата суту-илӳпе финанс органӗсен пайӗн заведующийӗ.

Ял Совечӗ обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе лайӑхлатма пулӑшрӗ

Кӳлхӗрри ял Совечӗ обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе лайӑхлатас енӗпе нумай ӗҫлет. Ку ыйтӑва кӑҫалхи пилӗк уйӑх хушшинче ял Совет сессийӗсенче тӑватӑ хутчен сӳтсе явнӑ.

«Трактор» колхозра выльӑх-чӗрлӗх шучӗ пӑртак ӳснӗ, анчах выльӑх витисем ҫителӗксӗр пулнӑ. Ҫак ҫитменлӗхе пӗтерме пулӑшас шутпа ял Совет сессийӗнче витесене юсас тата ҫӗнӗ витесем лартас ӗҫ мӗнле пыни ҫинчен колхоз председателӗн Ефремов юлташӑн отчетне итленӗ, решени йышӑннӑ. Кун хыҫҫӑн колхозра витесене хӑвӑртрах юсама тата ҫӗнӗ витесем лартас ӗҫе васкатма пикенсе тытӑнчӗҫ. Ҫав ӗҫ мӗнле пынине ял Совет председателӗ П. Васильев юлташ тӗрӗслесе пычӗ. Колхоз правленийӗ строительство бригадинче ӗҫлекенсен йышне 2 хут ӳстерчӗ. Строительство материалӗсене пӗтӗмпех туттарса хатӗрлесе пачӗ. Строительство бригади ҫӗнӗрен лартмалли витесемпе ҫуртсене ҫак кунсенчех туса пӗтерет. Кивӗ витесене пурне те юсанӑ. Обществӑлла выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫарма апат ҫителӗклӗ хатӗрленӗ, выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем государствӑна вӑхӑтра парса татнӑ.

Выльӑх-чӗрлӗхрен тупӑш илесси те ӳссех пырать. Октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне сӑвакан кашни ӗнерен 1.100 литр сӗт суса илнӗ.

О. ИВАНОВА.
Калинино районӗ.

Тĕнчери лару-тăру

ТУСЛĂХ УЙĂХЛĂХĔСЕМ

Халăх демократи çĕршывĕсенче кашни çулах çав çĕршывсемпе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕсене организациленĕ. Нумаях пулмасть кун пек уйăхлăхсене Болгарипе Албанире ирттернĕ. Халĕ туслăх уйăхлăхĕсем Польшăра тата Румынире пулса иртеççĕ. Ноябрĕн 7-мĕшĕнче, Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнă кун, Чехословакире Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕ пуçланать.

Совет халăхĕпе тытакан туслă çыхăнусене тата пĕр-пĕрипе килĕштерсе ĕçлессине çирĕплетсе пынинче халăх демократи çĕршывĕсенчи ĕçсыннисем хăйсен телейлĕ пуласлăхĕн çирĕп шанăçне кураççĕ. «Совет Союзĕпе туслă пурăнни,—тесе çырать Польшăри «Трибуна люду» хаçат,—тăхăр çул хушши ĕнтĕ пирĕн çĕршывăн вăй-хăватне тĕреклетес ĕçри, социализм строительствин аслă ĕçĕнчи çитĕнÿсен хăватлă çăлкуçĕ пулса тăрать». Совет Союзĕ социализмран майĕпен коммунизма куçса пырас тĕллевпе хăй умĕнче тăракан программăна пурнăçа кĕртес ĕçре тунă пите пысăк çитĕнÿсем халăх демократи çĕршывĕсенчи пирĕн туссене хавхалантараççĕ. Совет Союзĕ ырă кăмăлпа пулăшни вĕсене халăх хуçалăхĕн планĕсене ăнăçлăн пурнăçлама, социализм çулĕпе хăвăртрах пыма май парать.

Халăх демократи çĕршывĕсенче кăçалхи виççĕмĕш кварталта халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй плансене ăнăçлăн тултарни çинчен нумаях пулмасть пĕлтернисем пичетленсе тухнă. Вĕсем çав çĕршывсен экономики вĕçĕмсĕр ÿссе пынине кăтартса параççĕ. Польшăра, Чехословакире, Венгрире, Румынире, Болгарире, Албанире промышленность производстви чылай ÿсни, ялхуçалăхĕ малалла аталанса пыни, халăхăн пурнăç условийĕсемпе культурăллă шайĕ ÿсни палăрать.

Туслăх уйăхлăхĕсем ирттерсе, халăх демократи çĕршывĕсенчи ĕçсыннисем продукци туса кăларассине ÿстерессишĕн тата унăн пахалăхне лайăхлатассишĕн уйрăмах хавхаланса ĕçлеççĕ. Вĕсем Совет Союзĕнчи производство новаторĕсен малта пыракан меслечĕсемпе ытларах та ытларах усă кураççĕ. Сăмахран, Польшăри предприятисенчи вунпин пин ĕçсыннисем Жандаровăпа Агафонова, Корабельникова, Чутких меслечĕсем тăрăх ĕçлеççĕ. Румынире «Совет техникин кунĕсем» пуçланнă. Вăл кунсене «Совет наукипе тата техникипе усă курса, ĕçсыннисен ырлăхĕшĕн таварсем ытларах, йÿнерех тата лайăхрах туса кăларар» текен лозунгпа ирттереççĕ.

Польшăри тата Румынири предприятисенче вырăнти рабочисем, инженерсемпе техниксем Совет Союзĕнчи новаторсемпе тĕл пулаççĕ. Çак тĕлпулусенче совет çыннисем урăх çĕршывсенчи юлташĕсене хăйсен ĕç опычĕпе паллаштараççĕ. Совет культурин деятелĕсем СССР-ти наукăпа техникăн çитĕнĕвĕсем çинчен лекцисемпе докладсем ирттереççĕ. Варшавăри тата София хулинчи театрсенче совет артисчĕсем хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ, совет кинофильмĕсене кăтартакан кинотеатрсене çĕршер пин ĕçсыннисем çÿреççĕ. Социализм çĕнтернĕ çĕршывăн пысăк çитĕнĕвĕсем çинчен каласа паракан выставкăсем пур çĕрте те организациленĕ.

Халăх демократи çĕршывĕсенче вырăс тата совет литературипе питĕ интересленеççĕ. Вăл литературăна кунта пысăк тиражсемпе пичетлесе кăлараççĕ. Вулакансем совет кĕнекисене нумай туянаççĕ. В. И. Ленинпа И. В. Сталин кĕнекисен тиражĕсем çултан-çул ÿссе пыраççĕ. Польшăри, Болгарири, Румынири тата ытти халăх демократи çĕршывĕсенчи пиншер ĕçсыннисем, совет кĕнекисене вырăсла вулас тесе, вырăс чĕлхине вĕренеççĕ. Румынире, сăмахран, кăçал вырăс чĕлхине вĕренес тĕллевпе 11 000 курс ĕçлет. Çав курссенче 200 пин çын вĕренет.

Халăх демократи çĕршывĕсемпе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществисем ĕçсыннисен массисем хушшинче пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ. Общество речĕсем вĕçĕмсĕр ÿссе пыраççĕ. Ку вăл ĕçсыннисен тăванла совет халăхĕн пурнăçĕпе питĕх те интересленни çинчен калать. Çакна палăртмалла: туслăх уйăхлăхĕн малтанхи икĕ эрни хушшинче Варшавăра Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх Обществине 100 пин, Сталиногруд воеводствинче 40 000 çĕнĕ член кĕнĕ. Болгарире туслăх уйăхлăхĕ пынă вăхăтра Болгарипа Совет Союзĕн обществисен 18 çĕнĕ организацине тунă.

Туслăх уйăхлăхĕсен программинче Совет Союзĕн тулашри политикине паллаштарасси питĕ паллă вырăн йышăнса тăрать. Вăл политикăн ушăнми тĕллевĕ пĕтĕм тĕнчери мире сыхласа хăварасси тата çирĕплетесси пулать. Халăх демократи çĕршывĕсенчи ĕçсыннисем Совет Союзĕн мире юратакан политикине кăмăллаççĕ, вĕсем миршĕн, тĕнчери тавлашуллă ыйтусене мирлĕ майпа татса парассишĕн кĕрешеççĕ.

Туслăх уйăхлăхĕсен кунĕсенче Совет Союзĕн çар карапĕсен отрячĕ Польшăри, Румынири тата Болгарири тинĕс порчĕсене пырса кайнă. Ку çĕршывсенчи ĕçсыннисем Совет Союзĕн мухтавлă морякĕсене тата вĕсем урлă пĕтĕм совет халăхне савăнăçлăн саламланă.

Халĕ, Октябрь уявĕ умĕн, халăх демократи çĕршывĕсенчи предприятисенче производство планĕсене срокчен тултарассишĕн патриотла ăмăрту çĕнĕ вăйпа сарăлса пырать. Пиншер рабочисемпе работницăсем ĕç вахтине тăраççĕ, чаплă уяв тĕлне планран ирттерсе продукци туса кăларма обязательствăсем илеççĕ. Ĕçри çакăн пек хастарлăхра Совет Союзĕпе тытакан никам çĕнтерейми туслăх тата Совет Союзне чунтан хисеплесе юратни çĕнĕрен уççăн палăрать.

ТУРЦИ—США-н ÇАР БАЗИ

Америкăпа Греци хушшинче нумаях пулмасть тунă çар килĕшĕвĕ çинчен çырса, ют çĕршывсенчи хаçатсем çакна пĕлсе тăнине палăртаççĕ: кун евĕрлĕ килĕшĕве çитес вăхăтра Турципе те тăваççĕ. Çакăнтан, паллă ĕнтĕ, нимĕн тĕлĕнмелли те çук, мĕншĕн тесен Америкăпа Турци хушшинче официальнăй йĕркене çар килĕшĕвĕ туни ячĕшĕн тăвакан ĕç кăна пулса тăрать. Тĕрĕссипе илсен, Пĕрлешÿллĕ Штатсем тахçантанпах ĕнтĕ Турцие çар бази вырăнне тата Америка монополийĕсем услам илекен çăлкуç вырăнне усă кураççĕ.

Çак кунсенче Искандерунра америкаăнецсем хăйсем тунă пысăк тинĕс-çар базине Турци влаçĕсене «панă». Анчах США Турцие çапла каланă: турoксене «пулăшу парас» тесе, çак базăра Америкăн çар чаçĕсем вырнаçаççĕ. Ку вăл çакна пĕлтерет: çакăн евĕрлĕ сооруженисене, чи малтанах, Пĕрлешÿллĕ Штатсене кирлĕ пулнă пирки тăваççĕ.

Турцие агрессиллĕ Çурçĕр Атлантика блокне кĕртнĕ хыççăн, Америкăн çар çыннисем ку çĕршывра хăйсен ĕçне палăрмаллах вăйлатрĕç. Юлашки çулталăк çурă хушшинче Турцин тĕрлĕ районĕсенче, сăмахран, Диарбекирта, Аданара, Коньере çĕнĕрен çар аэродромĕсем тунă. Çĕнĕрен тинĕс-çар базисем чылай тунă. киввисене çĕнетсе урăхлатнă. Çар маневрĕсем нумай ирттернĕ, вĕсене Америка генералĕсемпе адмиралĕсем ертсе пынă. Америкăн «советникĕсен» тата тĕрлĕ йышши «специалистсен» хисепĕ тăтăшах ÿссе пырать. Вĕсене тытса тăма Турци бюджетĕнчен питĕ нумай укçа-тенкĕ расходлаççĕ.

Турцие пĕрин хыççăн тепри Америкăн çар миссийĕсем пырса каяççĕ. Вĕсем пĕр чăрмавсăрах Турцин хĕçпăшаллă вăйĕсене тĕрĕслеççĕ, вĕсене хăйсен агрессиллĕ планĕсене кирлĕ пек улăштарса йĕркелеççĕ. «Джумхуриет» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Измирта улттăмĕш сывлăш çарĕн штабне тăваççĕ. Ку, çар Çурçĕр Атлантика блокне пăхăнса тăрать. Çавна май кунта çĕнĕ аэродром тума пуçлаççĕ.

Кăçалхи сентябрь уйăхĕнче Турцие США оборона министрĕн заместителĕ Кэйс пырса кайнă. Турцири хаçатсем палăртнă тăрăх, Анкара хулинче Кэйс çар строительствине малалла сарса пымалли план çинчен каласа панă. Уйрăммăн илсен, Искандерун—Адана—Диарбекир таврашĕнчи районта Çурçĕр Атлантика блокĕн базине тума палăртнă.

Турци экономикине ытларах та ытларах вăрçа валли юрăхлă туса пыраççĕ. Çар валли каякан расходсене, США «пулăшу» тесе уйăрса паракан укçа-тенкĕпе пĕрле шутласан, кăçал пĕр миллиард та сакăрçĕр миллион лирăна (Турци укçи) çитернĕ, Турци бюджетĕнче мĕнпур расходсем вара 2 127 миллион лирăран кăшт кăна ытларах. Кун пек лару-тăрура граждансла производство тата халăхăн социальнăй-культурăллă ыйтăвĕсем çинчен пачах манаççĕ темелле. «Улус» хаçат ахальтен мар ĕнтĕ çапла ÿпкелешнĕ: Çурçĕр Атлантика блокĕн руководителĕсем, Турци çине çар йывăрлăхĕсене тиесе, «пирĕн ялсенчи ĕçсыннисен пурнăç шайне çÿлелле кирличе шута илмеççĕ. Çапла калама пулать: вăл ялсенчен нумайăшĕнче халăх чул ĕмĕрĕнчи пек условисенче пурăнать».

Вăрçа хатĕрленмелли политика халăхăн анлă массисене чухăнлăха кĕртсе ÿкерессине ÿстерет. Çĕршывра ĕçсĕрлĕх тăтăшах ÿссе пырать, выçă çынсем пиншерĕн хуласемпе ялсем тăрăх çăкăр татăкĕ шыраса çÿреççĕ. «Акшам» хаçат палăртнă тăрăх, юлашки виçĕ çул хушшинче апат-симĕç таварĕсен хакĕсем Турцире 45—100 процент чухлĕ, эмелсен хакĕсем икĕ-виçĕ хут ÿснĕ. Турци рынокне Америкăн таварĕсемпе тултараççĕ, çавна пула çĕршыври предприятисене, уйрăмах пир-авăр фабрикисене нумай хупаççĕ. США-н дискриминациллĕ суту-илÿ политики Турцин тулашри суту-илĕвне чакарса лартасси патне илсе çитернĕ. Кăçал сакăр уйăх хушшинче Турцин тулашри суту-илĕвĕнчи дефицит 250 миллион лира чухлĕ пулнă.

Нумаях пулмасть Турци правительстви ют çĕршывсене Турцире капитал хывма хавхалантарасси çинчен закон проекчĕ туса хатĕрленĕ. Ун умĕн Анкарăна США-н экономикăлла тулашри политикин ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен комисси председателĕ Рэндолл ертсе пыракан экономикăлла делегаци пырса кайнă пулнă. «Истанбул» хаçат кăтартса панă тăрăх, Рэндолл, ют çĕршыв капиталĕ Турци экономикине хутшăнассине чăрмантаракан закона Турци правительстви улăштартăр тесе, çине тăнă.

Çапла майпа, США-ри влаçра тăракан ушкăнсем, Турцирен хăйсен çар плацдармĕ туса пырса, çав вăхăтрах ку çĕршыва экономика тĕлĕшпе пăхăнтарса тăрассине вăйлатса пыраççĕ. Турци правительстви хăйĕн Çурçĕр Атлантика блокĕнчи аслă юлташĕн требованийĕсене çăмăллăнах пурнăçлать пулсан, Турци халăхĕ вара Америка пуç пулса тăнине чунтан кураймасть, унпа килĕшме пултараймасть. Террора тата полици хĕсĕрленине пăхмасăр, çĕршывра миршĕн, иреклĕхшĕн тата Турцин никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан юхăм сарăлнăçемĕн сарăлать.

ПĔРЛĔХ КОНГРЕСĔ

Венăра ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕнчи ĕçсыннисен пĕтĕм тĕнчери конференцийĕ пулса иртнĕ. Ăна Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн производствăлла пайĕ пухнă. Конференци ĕçне 60 çĕршыври профсоюзсемпе хресченсен организацийĕсен представителĕсем 146 çын хутшăннă. Нумай делегатсем Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацине кĕмен организацисенчен пынă пулнă.

Конференцире пулнисем ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕнчи ĕçсыннисен пурнăç условийĕсемпе тата вĕсен экономикăпа социальнăй требованийĕсемшĕн пыракан кĕрешĕвĕпе çыхăннă ыйтусене сÿтсе явнă. Ыйтусене сÿтсе явнă вăхăтра çакă палăрнă: ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕнчи ĕçсыннисене капитализмла çĕршывсенче пуринчен ытларах хĕсĕрлеççĕ. Уйрăмах колониллĕ тата çурма колониллĕ çĕршывсенчи хресченсен пурнăçĕ йывăр. Вăл çĕршывсенче ĕçсыннисене хаяррăн эксплуатациллеççĕ, урăх расăллă çынсене, тан мар тесе шутласа, пусмăрласа хĕсĕрлеççĕ. Халăх хĕн-хурлă та асаплă пурнăçпа пурăнать. колонизаторсем вара питĕ пысăк услам илеççĕ.

Конференцире Уругвай, Чили, Эквадор, Венесуэла, Цейлон, Кăнтăр Африка тата ытти нумай çĕршывсен делегачĕсем шултра аграрисемпе ют çĕршыв монополийĕсем хресченсемпе ялхуçалăхĕнчи рабочисене экономикăлла тата политикăлла чуралăхра усранине кăтартса паракан фактсем нумай илсе кăтартнă. Эквадорта, сăмахран, пĕтĕм çĕре 240 çĕр магначĕ тытса тăрать. Кенире чи лайăх çĕр лаптăкĕн 50 процентĕ—Англи монополийĕсен аллинче. Африкăра 5,5 миллион хресченĕн çĕр пачах çук. Боливире хресченсен 95 процентĕн çĕр çук. Коста-Рикăра акмалли çĕрĕн пысăк пайĕ Америка монополисчĕсен аллинче тăрать. Ялсенчи ĕçсыннисем хушшинче чухăнлăх, хут пĕлменлĕх, чирсем пуç пулса тăраççĕ.

Анчах та, йывăр условисене тата полицейскисем хаяррăн хĕсĕрленине пăхмасăр, пусмăрта пурăнакан хресченсем хăйсен прависемшĕн кĕрешме пăрахмаççĕ. Ку кĕрешÿ мĕнпур прогрессивлă вăйсен ирĕклĕхпе никама пăхăнманлăхшăн, империалистсем пуç пулса тăнине хирĕç пыракан кĕрешĕвĕпе пĕрлешет. Конференци делегачĕсем пĕрлешсе кĕрешессине тата ытларах çирĕплетме, ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕнчи ĕçсыннисен Пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвĕ тавра тата ытларах пĕтĕçме кирлине кăтартса панă.

Çакна палăртмалла: конференцие хатĕрленнĕ тапхăртах хресченсен профсоюзĕсен 10 организацийĕ çак пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕве кĕнĕ. Вĕсем çапла майпа пĕтĕмĕшле интерессемшĕн пыракан кĕрешÿре пĕрлĕхпе пĕтĕçÿлĕхшĕн тăнине кăтартса пачĕç. Нимĕн иккĕленмелли те çук, тĕрлĕ çĕршывсенчи хресченсен ытти нумай организацийĕсем те кĕрешĕвĕн çак çулĕ çине тăрĕç.

Д. БОЧАРОВ.

ССР Союзĕнчи ялхуçалăхĕнче малта пыракансем Венгри Халăх Республикинче пулнă. Хăнасем Капонашнекри (Фейер комитачĕ) Вэрэшмарти ячĕпе тăракан çĕрĕç кооперативне пырса курнă.

ÜКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Мускав облаçĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри пахча çимĕç бригадин бригадирĕ Е. М. Скороспелова тата Молдаван ССР-ĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз председателĕ К. А. Гузун çĕрĕç кооперативĕнчи бригадирпа Йожеф Молнарпа калаçаççĕ.

«Мадьяр фото» фотоÿкерчĕкĕ.

Совет Союзĕпе Германин хутăш комиссийĕн пĕрремĕш ларăвĕ

БЕРЛИН, октябрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Совет Союзĕпе Германин хутăш комиссийĕн пĕрремĕш ларăвĕ пулса иртнĕ. Вăл комиссие 1953 çулхи августăн 22-мĕшĕнче Мускавра «Германирен репарацисем илме чарăнасси çинчен тата вăрçă хыççăн Демократиллĕ Германи Республики йышăннă финанспа экономикăлла обязательствăсене çăмăллатмалли ытти мерăсем çинчен» йышăннă протоколăн иккĕмĕш пайĕ тăрăх тунă.

Совет Союзĕпе Германин хутăш комиссийĕн членĕсем пулма Демократиллĕ Германи Республикин правительстви Фриц Зельбмана (руководитель), Пауль Штрассенбергера, Вилли Румпфа; СССР правительстви—И. Ф. Семичастнова (руководитель), С. П. Трофимова, Н. Л. Бибенина уйăрса лартнă.

Комисси хăйĕн пĕрремĕш ларăвĕнче организациллĕ чылай ыйтусене сÿтсе явнă, предприятисене 1954 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Демократиллĕ Германи Республикине парас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене палăртнă, комиссин малашне ĕçлемелли йĕркине çирĕплетнĕ.

Лару ĕçне Демократиллĕ Германи Республикин финанс министрĕн заместителĕ Курт Леман, Совет Союзĕн Демократиллĕ Германи Республикинчи суту-илÿ представителĕ Б. П. Мартынов тата Совет Союзĕн Германири пурлăхĕсен Управленийĕн руководителĕн заместителĕ С. А. Фоменко хутшăннă.

Италири коммунистсен партийĕн членĕсен хисепĕ ÿсет

РИМ, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). «Унита» хаçат çапла пĕлтерет: 1953 çулхи сентябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне Италири Коммунистсен партийĕн членĕсен хисепĕ 2.120.208 çынна çитнĕ. 1948 çулта вĕсен хисепĕ 2.115.232 çын пулнă.

Паулюс Совет правительствине пĕлтерни

Нимĕçсен тыткăнри çар çыннисене Совет Союзĕнчен хăйсен тăван çĕршывне каялла янă май, Паулюс генерал-фельдмаршала та репатриациленĕ. Паулюс Германие пырса çитнĕ хыççăн яланлăхах Демократиллĕ Германи Республикинче пурăнма юлнă. Совет Союзĕнчен тухса каяс умĕн Паулюс СССР Правительствине çапла пĕлтернĕ:

«Совет Правительствине

Совет Правительствипе Демократиллĕ Германи Республикин Правительство делегацийĕ 1953 çулхи августăн 23-мĕшĕнче пĕлтернипе килĕшÿллĕн, нимĕçсен тыткăнри çар çыннисене ирĕке кăларнă май, тыткăнран тăван çĕршыва таврăннă май, Совет Союзĕнчен тухса кайиччен манăн çакăн çинчен калас килет

Совет Правительстви кăçалхи августăн 23-мĕшĕнче тыткăнри çар çыннисем тĕлĕшпе ырă кăмăлпа йышăннă решени тепĕр хут çакна çирĕплетсе парать: Совет правительстви Германи тĕлĕшпе тытса пыракан хăйĕн политикинче эпир вăрçă пуçласа совет халăхне кÿнĕ питех те пысăк асапсемшĕн тавăрас шухăш тытмасть. Пачах урăхла, вăл хăйĕн мирлĕ политикипе,—ку политика çÿлте йышăннă решенире çĕнĕрен палăрчĕ,—пĕтĕм Германи халăхне Германи пĕрлĕхĕ патне пымалли мирлĕ çулпа, çапла ĕнтĕ телейлĕ пуласлăх патне пырас ĕçе çăмăллатать.

Сталинград патĕнчи çапăçу ман тăван çĕршывăн кун-çулне татса пачĕ. Çав çапăçура Германи çарĕсен командующийĕ пулнă май, эпĕ агрессиллĕ вăрçăн мĕнпур тискерлĕхне вĕçне çитиччен куртăм. Эпир тапăннă пирки пулнă вăрçă тискерлĕхне совет халăхĕ кăна мар, манăн салтаксем те тÿссе курчĕç. Манăн хамăн опыт, çавăн пекех иккĕмĕш тĕнче вăрçи мĕнле вĕçленни мана çакна ĕнентерчĕ: Германи халăхĕн кун-çулне пуç пулса тăрас текен илĕйăпа тума çук, Совет Союзĕпе тата мире юратакан мĕнпур халăхсемпе нумай вăхăт хушши туслă пурăннипе кăна тума пулать. Çавăнпа та мана çапла туйăнать: Хĕвеланăçĕнче тунă вăрçă договорĕсенче пуç пулса тăрас шухăш палăрса тăрать. Вăл договорсем Германи пĕрлĕхне мирлĕ майпа тума тата Европăра мир тăвассине пурнăçлама юрăхлă майсем пулса тăмаççĕ. Унтан та ытларах, ку договорсем Германие пайланă май тухса тăнă хăрушлăха ÿстереççĕ кăна. Çак договорсем Германи пайланса тăнине пĕтерме май памаççĕ. Эпĕ çакна ĕненсе тăратăп: Германие мирлĕ майпа пĕрлештермелли тата Европăра мир тумалли чи тĕрĕс çул вăл нимĕçсем хушшинче килĕшÿ туни тата Совет Правительстви Германи ыйтăвĕ тĕлĕшпе кăçалхи августăн 15-мĕшĕнче Хĕвеланăçĕнчи державăсене панă нота тăрăх мирлĕ договор тăвасси пулать.

Çавăнпа та эпĕ тăван çĕршыва таврăннă хыççăн таса тивĕçе пурнăçлама—Демократиллĕ Германие мирлĕ майпа пĕрлештерес тата Германи халăхне совет халăхĕпе, мире юратакан мĕнпур ытти халăхсемпе туслă пурăнмалла тăвас ĕçе пĕтĕм вăя хурса пулăшу пама шут тытрăм.

Совет Союзĕнчен тухса кайиччен эпĕ совет çыннисене çакăн çинчен калас тетĕп: хăй вăхăтĕнче эпĕ вĕсен хушшинче ним ăнланмасăр пурнăçласа, вĕсен çĕршывне тăшман пулса килнĕччĕ, халĕ ку çĕршывран унăн тусĕ пулса тухса каятăп.

1953 çулхи октябрĕн 24-мĕшĕ.

Фридрих Паулюс,
ĕлĕкхи Германи çарĕн генерал-фельдмаршалĕ».

(ТАСС).

Америка агенчĕсене суд тунă

БЕРЛИН, октябрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Галлери округ судĕнче агентсен ушкăнне суд туса пĕтернĕ. Вĕсем, Америкăн шпионла центрĕ кăтартса тăнипе, 1951 çултанпа Вальтер Ульбрихт ячĕпе тăракан «Лейна-верке» заводра шпионла ĕçсем тунă. Айăпланакансем хăйсем июнĕн 17-мĕшĕнчи фашистла провокацие активлă хутшăннине тата Хĕвеланăç Берлинри шпионла центра «Лейне-верке» завод çинчен тăтăшах сведенисем парса тăнине йышăннă.

Тĕп айăпланакан Х. Гладе, хăй каланă тăрăх, Хĕвеланăç Берлина 12 хутчен шпионла сведени панă, унтан вăл икĕ уйăхра пĕр хутчен заданисем илсе тăнă. 1951 çулхи август уйăхĕнче вăл халĕ суд умне тăратнă Бейнсла Хана агент пулса ĕçлеме илнĕ.

Айăпланакан Клара Гладе—Х. Гладе арăмĕ шпионла центр панă заданисене пурнăçласа тăнă.

Суд Х. Гладене 14 çуллăха, унăн арăмне Клара Гладене тата айăпланакан Бейнса улттă çуллăха, Хана пилĕк çуллăха тĕрмене хупма приговор йышăннă.

Колонизаторсен Кенири терророрĕ

ЛОНДОН, октябрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер черетлĕ карательнăй операци вăхăтĕнче Кенире Англи çарĕсем 36 çынна вĕлернĕ.

«Дейли уоркер» хаçат колони влаçĕсем Кени халăхне хирĕç туса пыракан террор кампанине тăрă шыв çине кăларакан материалсем пичетлесе кăларнă. Хаçат çапла çырать: Лондонра Кенири шурă ÿтлĕ çынсен организацийĕн, «Кенири суйлавçăсен союзĕ» текенскерĕн, вăрттăн документне илнĕ. Документ çав организаци негрсене хирĕç террористла кампани пуçарса яракан организаци пулни çинчен калать.

Англири хыпарсем тăрăх, чрезвычайнăй лару-тăру тунăранпа пĕр çул иртнĕ хушăра Кенире пилĕк пин негра вĕлернĕ тата вырăнти халăхран 28 пин çынна яхăн концентрационнăй лагерьсене хупнă.

Вьетнам çамрăкĕсене Бао Дай çарне илес ĕç путланса ларнă

ПЕКИН, октябрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви çапла пĕлтерет:

Вьетнамран пĕлтернипе çапла калать: французсем Вьетнамăн оккупациленĕ районĕсенче хăвăрт майпа 54 çăмăл батальон (40 пин салтака яхăн) тумалли плана пурнăçлас ĕçре кашни кун пысăкран та пысăк йывăрлăхсене тĕл пулаççĕ.

Пĕлтернипе çавăн пек çакна кăтартса панă: Бао-Дай «пĕтĕмĕшле мобилизаци çинчен панă приказа» рабочисем, студентсем тата ыттисем хуласенче протестлекен демонстрацисем тунипе кĕтсе илнĕ. Вьетнамри Ханой тата Гуэ хулисенчи студентсем обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕренмелли программăна хирĕç пĕрлешсе кĕрешеççĕ. Вьетнамăн нумай çамрăкĕсем çар тумне тăхăнса килĕшмеççĕ. Вĕсем пуканелле правительство çарĕсен вĕренÿ центрĕсенчен тараççĕ.

Америкăри «Ньюсуик» журнал нумаях пулмасть çакна йышăнчĕ: пуканелле правительство çарĕн сайралса юлнă речĕсене тултарма кирлĕ чухлĕ офицерсем вĕрентсе хатĕрлес тесен, Бао Дая тăватă çул вăхăт кирлĕ.

ПОЛЬШĂПА ФРАНЦИ СУТУ-ИЛÿ КИЛĔШĔВĔ ТУНĂ

ВАРШАВА, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăри пичет агентстви çапла пĕлтерет: ĕнер Варшавăра Польшăпа Франци пĕр çуллăха тунă суту-илÿ килĕшĕвĕ çине алă пуснă. Ку килĕшÿ тăрăх Франци Польшăна искусственнăй удобренисем, тимĕр рудин, металлурги промышленноçĕ туса кăларнă изделисем, химикалисем, улма-çырла, апат-симĕç тата ытти таварсем те парса тăмалла. Польшăн Францие çĕр кăмрăкĕ, йывăç, керамика тата металран ипаласем тăвакан промышленность изделийĕсем тата ытти таварсем те парса тăмалла пулать.

Мускаври универмаг валли

ÇĔМĔРЛЕ. Комбинат цехĕнчи хатĕр продукци хумалли уйрăм. Йĕркерен лартса тухнă кассăсемпе тумбочкăсем. Вĕсене лакпа сĕрленĕ,—кĕленче пек йăлтăртатса тăраççĕ. Ку—Мускаври универмаг заказĕ.

Пысăк пахалăхлă йывăç япаласем тăвас тĕлĕшпе Çĕмĕрле столярĕсен пахa опыт пур ĕнтĕ. Ку таранччен вĕсем Ломоносов ячĕпе тăракан государство университечĕ валли 25 миллион тенкĕлĕх лаборатори сĕтелĕсемпе шкафсем туса пачĕç. Çавăнпа та çĕнĕ заказа пурнăçлама столярсене ытлашши йывăрах та пулмарĕ. 26 кун хушшинче комбинат столярĕсем, 168 касса тата 75 тумбочка туса, пĕтĕм заказа срокчен пурнăçларĕç.

Çак кунсенче кассăсемпе тумбочкăсене Универмаг залĕсене вырнаçтарса лартма столярсен пĕр ушкăнĕ Мускава тухса кайрĕ.

Е. АФАНАСЬЕВ.
(Хамăр корр.).

Тĕл перекенсен ăмăртăвĕ

Кăçал РСФСР-ти педагогика институчĕсем хушшинче тĕл перекенсен заочнăй ăмăртăвĕ пулса иртрĕ. Ăмăртăва тĕрлĕ хуласенчи институтсенчен çĕр команда ытла хутшăннă.

Чăваш Педагогика институтĕнче çак ăмăртăва 5-шер çынтан тăракан арçын ачасен тата хĕрачасен командине тăратнă.

Арçынсен командине паллă стрелоксем Л. Иванов, Л. Толстов, Ю. Калгев, В. Ильин, Б. Рыбаков студентсем кĕнĕ. 500 очко илме май пур çĕртен вĕсем 461 очко илнĕ. Хĕрачасен команди те 500 очко илме май пур çĕртен 418 очко пухнă.

Çак кунсенче Мускавран заочнăй ăмăртусен результачĕсене пĕлтернĕ. Чăваш Педагогика институтĕнчи арçынсен команди çиччĕмĕш вырăна, хĕрачасен команди 16-мĕш вырăна тухнă. Пĕтĕмĕшпе илсен, институтри тĕл перекенсен командисем çак ăмăртура 13-мĕш вырăн йышăннă.

В. ШАЛТАЙКИН.

Сад пахчинче

СОВЕТСКИ. Жданов ячĕпе тăракан колхоз садран тата питомникрен çулсеренех пысăк тупăш илет. Сад пахчи виçĕ гектар йышăнать, унта 65 пин тĕп улмаçырла йывăççи шутланать. Сад пахчинче сакăр çул хушши Н. Гордеев юлташ бригадир пулса ĕçлет.

Кăçал колхозра 10 пин тĕп улмуççи çитĕнтернĕ. Колхоз çак йывăççене кÿршĕри колхозсене тата колхозниксене сутса 25 пин тенкĕ ытла тупăш илчĕ.

В. АЛЕКСАНДРОВ.

Октябрьски районĕнче

Хăмларан пысăк тупăш. Районти колхозсем пысăк тухăçлă хăмла туса илчĕç. Ку енĕпе уйрăмах «Звезда» колхоз членĕсем пысăк ÿсĕм тунă. Колхоз хăмларан 279.152 тенкĕ тупăш илчĕ.

Самообложени укçипе. Энтри Пасар ял Совечĕ самообложени укçипе кашни çулах тĕрĕс усă курма тăрăшать. Кăçал та çак укçапа кĕпер тата çăлсем тунă.

Кĕнекесен шучĕ ÿсет. Октябрьски ял Советĕнчи вулав суртĕнче 1.860 кĕнеке шутланать. Нумаях пулмасть тата 1.000 тенкĕлĕх кĕнеке, вăл шутра 600 тенкĕлĕх ялхуçалăх литератури туяннă.

Государство пулăшăвĕ. Кăçал районти ĕçсыннисем тăхăр уйăх хушшинче государствăран пĕр миллион тенкĕ ытла пособи тата пенси укçи, тăватă пин тенкĕ яхăн вăхăтлăх пулăшу илчĕç. Бунсăр пуçне ĕçсыннисене ытти енĕпе те чылай пулăшу панă.

Обязательствăсене пурнăçланă. Молотов ячĕпе тăракан колхоз государствăна апкавай тата çăм памалли çулталăкри обязательствăна ăнăçлăн пурнăçларĕ. Сĕт памалли обязательствăна та сентябрĕн 10-мĕш тĕлне пурнăçланă.

Колхоз государствăна 3 пин литр ытла сĕт сутрĕ.

В. ТРОФИМОВ.

ПĔЛТЕРНИ

Ноябрĕн 3-мĕшĕнче, 20 сехетре, КПСС хула комитечĕн библиотека суртĕнче парти историне марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсем тăрăх вĕренмелли кружоксен руководителĕсен семинарĕсенче занятисем пулаççĕ. Занятие пĕрремĕш тата иккĕмĕш çул ĕçлекен кружоксен руководителĕсен пухăнмалла.

Семинар занятийĕсене П. М. Михайлов тата А. Н. Воробьев юлташсем ирттереççĕ.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

КИНО

«УДАРНИК»—ноябрĕн 3-мĕшĕнче çĕнĕ илемлĕ фильм «Песни родной стороны».

Сеанссем пуçланаççĕ: 14 сехет те 15 минутра, 16 с. 15 м., 18 с. 15 м., тата 20 с. 15 м.

Шупашкар хулинче, Константин Иванов урамĕнчи 69-мĕш çуртри 9-мĕш хваттерте пурăнакан Раиса Федоровна Головчина упăшкинчен—Киров облаçĕнчи Уржум хулинче, Елкин урамĕнчи 23-мĕш çуртра пурăнакан Георгий Архипович Головчинран уйрăлма ĕç пуçарнă. Ĕçе Чăваш АССР-ĕнчи Шупашкар хулинчи 1-мĕш участокри халăх судĕнче пăхса тухаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, обзорсен пайĕ—0-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

ИТ 09199 Типографи № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2487. Тираж 20.000 экз.